Пĕчĕк хулан спорт пысăк уявĕ – кунта çăлтăрсем «çуталчĕç» ● 3 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

# Чăваш Хĕрарăмĕ

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

31(901) №, 2015, август/çурла, 8

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

● Вăрçă хыççăнхи пĕремĕк 2 стр.
● Яковлев халалне пăхмасăр вĕренме пуçлĕç 5 стр.
● Сĕтри çу виçине ӳстерме 8 стр.
● Хăмăшлăхра çапла пулнă 9 стр.

ÇĂЛТĂР ÇӲПÇИ

## Халăх вĕрентĕвĕн асамлă мелĕсем



**Анисия ИГНАТЬЕВА, ЧР тава тивĕçлĕ учителĕ**

Пирĕншĕн тĕлĕнмелле çынсенчен пĕри – Геннадий Никандрович Волков, тĕнчипе паллă этнопедагог.

Ăсĕ çивĕч унăн, шухăшĕ тарăн. Геннадий Волковшăн анне – Турăпа пĕр тан. Ачан малашлăхĕ вăл хăйĕн амăшне еплерех хисеплесе ӳснинчен питех те нумай килет. Çавăнпа та эпир шкулта ачана амăшне хисеплесе ăна хăй пултарнă таран пулăшма, юратнине палăртса амăш чĕлхипе каласма хистетпĕр.

Чăвашла пĕлмен чăвашсен пуç мими çутçанталăк хушнă пек аталанса пыраймасть. Анне чĕлхинче вара ăнлантарса пама май çук темле асамлă вăй пур. Çак вăй ачара пытарăнса тăракан хăвата вăратса çитĕнӳсем тума çул уçса пырать.

Паянхи ачасене вунă çул каяллахисемпе танлаштараймăн. Кунта вĕсен айăпĕ çук. Компьютер самани, обществăри рынок хутшăнăвĕ вĕсене тĕпрен улăштарать. Шел те, учитель ачана кӳрентернĕ тĕслĕхсем те илтĕнме пуçларĕç.

Килте ачан Турă вырăнĕнче – амăшĕ, шкулта учитель пулмалла. Ачана пурнăçăн усал йĕркисенчен пирĕн, шкулти амăшĕн, упрамалла, темĕнле лару-тăрура та пĕр чĕлхе тупса хавхалантарма пĕлмелле. Çĕнĕ мелсем шырама кирлĕ мар – вĕсене халăхран пĕрчĕн-пĕрчĕн пухса Геннадий Волков академик пирĕн пата илсе çитернĕ. Шăпах çакна – халăх вĕрентĕвне – тĕпе хурса ĕçлемелле, ун мелĕсене алла илмелле. Ку енĕпе этнопедагогăн кĕнекисене шĕкĕлчемелле.

Академик çĕр çинче чи хăватлă мел те, эмел те Юрату иккенне ĕнентерчĕ. Çак мелпе уйрăмах учительсен хăйсен ĕçĕнче кашни самантрах усă курмаллине палăртатчĕ ученăй. «Шкул ачисене учителĕн хăйĕн ачисем пек юратма вĕренсе çитмелле. Педагогикăра пĕрремĕш вырăнта пĕлӳ мар, Юрату пулмалла. Юрату хăй учителе çирĕп ăстăнлă, тарăн пĕлӳллĕ, анлă тавракурăмлă, ырă кăмăллă та ăш пиллĕ пулма хистет. Çут çанталăк вăрттăнлăхĕпе асамлăхĕ йăлтах – Юратура”.

Академик пиллесе-пехиллесе хăварнă пек, эпĕ хамăн вĕренекенсене яланах мухтатăп. «Пĕлетĕр-и: эсир пурте генисем», – тетĕп. Çакă вĕсене питĕ хăпартлантарать. Ваттисем калашле, ырă сăмах – çу кунĕ, усал сăмах – хĕл кунĕ.

Малта пыракана çăмăл маррине палăртатчĕ академик. Чăваш чĕлхи учителĕсен яланах малти ретре пулмалла. Сирĕнте – чăваш малашлăхĕ.

«Килĕшӳпе юратура пурăнакан ачасем пиллĕхлĕ». Çапла пултăр!

ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 08.08 | + 18 | + 16 |
| 09.08 | + 23 | + 16 |
| 10.08 | + 23 | + 16 |
| 11.08 | + 21 | + 18 |
| 12.08 | + 21 | + 15 |
| 13.08 | + 20 | + 12 |
| 14.08 | + 22 | + 13 |

# Кирилл Патриарх килни Чăваш Ен историне ылтăн саспаллисемпе çырăнчĕ



4 стр.

Çурла уйăхĕн пуçламăшĕ пирĕншĕн, республика çыннисемшĕн, Чăваш Ене Мускав тата Пĕтĕм Руç Патриархĕ Кирилл килнипе асра юлчĕ. Эпир тахçантанпах унпа тĕл пулма ĕмĕтленнĕ. Ăна чунран кĕтнĕ. Çакă Унăн Святейшестви çитес çĕре ĕненекенсем нихçанхинчен йышлă пухăннинченех палăрчĕ.

Вырăс Православи Чиркĕвĕн Пуçлăхне аэропортра Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава, Чăваш Республикин тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн председателĕ Юрий Попов тата официаллă ытти çынсем кĕтсе илчĕç.

«Чăваш Республикине чи ырă кăмăл-туйăмпа килсе çитрĕм. Чăваш çĕрĕ çинче Шупашкарта эпĕ пĕрремĕш хут 1969 çулта пулнă. Унтанпа Чăваш Ен тата Шупашкар пурнăçа хăтлăлатас тата чиркĕве аталантарас тĕлĕшпе нумай ĕç тунине пĕлетĕп. Манăн республикăн çĕнĕ сăнне курас, халăхпа пĕрле кĕлĕ тăвас, сăваплă вырăнсене çитес килет. Пил парса Турă юратăвне Чăваш Республикинчи пурăнакан кашни çын патне çитересшĕн», – журналистсене çапла каларĕ хаклă хăна.

### Пӳлĕхçĕ сăмахне йышăнакан вăйлă

Чи малтан Пукрав тата Татиана соборне çул тытрĕ вăл. Хăйне аслă ӳсĕмрисемпе пĕрле вырсарни шкулĕсенче вĕренекен ачасем кĕтсе илнишĕн хĕпĕртенине пытармарĕ Мускав тата Пĕтĕм Руç Патриархĕ Святейший Кирилл.





# Хитре Тамар

**Канаш районӗнче пӗр пӗчӗк те илемлӗ ял пур – Аслӑял. Маншӑн унран пахи нимӗн те ҫук. Паллӑ ӗнтӗ – ҫуралнӑ кӗтесӗм вӑл. Аван ҫынсем пурӑнаҫҫӗ кунта. Кашнин расна шӑпа – хури, шурри, йӳҫҫи, пылакки... Мӗн тӑвӑн-ха, пурнӑҫ пӗр пек килмест-ҫке. Апла пулин те хамӑр ялсене питӗ кӑмӑллатӑп. Кӑҫал Аслӑ Ҫӗнтерӳ 70 ҫул тултарнӑ май пӗтӗм ял-йыш пӗр пулса салтаксен ячӗпе палӑк лартрӗ. Ăна уҫма клуб ертӳҫи Римма Петровна та нумай тӑрӑшрӗ.**

Унсӑр пуҫне пирӗн ял ҫыннисем вулама юратаҫҫӗ. Тамара Емельянова, Маргарита Александрова тата ыттисем те эпир пурте юратакан "Чӑваш хӗрарӑмӗ" хаҫата ҫырӑнса илеҫҫӗ. Почтальонка Алена та маттур пике.

Рита инке, ҫапла чӗнетпӗр ӑна, килкарти тулли вылӑх усрать пулин те хаҫата пӗр сиктерми вулать. Тамар аппа вара 87 ҫула ҫитнӗ пулин те аллинчен кӗнеке, хаҫат-журнал ямасть. Чӑваш ҫыравҫисен вуламан кӗнеки юлман тесен те юрать. Унсӑр пуҫне вӑл ҫӗвӗ ҫӗлеме юратать. Кӗҫӗн хӗрӗ Оля та амӑшӗ евӗрех ӑста, ялти ҫамрӑксене чӑваш тумтирӗ ҫӗлесе парать. Кӳкеҫре пурӑнакан хӗрӗ Надя тӗрлӗ пусмапавар илсе килсе парать. Илемлӗ тӗссене курсан Тамар аппа каҫсах каять.

– Ай-тур-тур, эх, ӗлӗк пулсан, мӗн тери савӑннӑ пулӑттӑм, – тет вӑл капӑр татӑксене тирпейленӗ май. – Мӗн чухлӗ япала, ача кӗпи ҫӗлеттӗм.

Мана та хитре саппун ҫактарчӗ вӑл. Шел, аннем ҫӗре ир кӗчӗ. Ҫав тери туслӑ пурӑнатчӗҫ.

Яла килсен калаҫса лармалла вӑхӑт сахал – пахчара ӗҫ тӑкӑнса тӑрать. Хӑш чухне май тупса эпӗ ҫапах та Тамар аппа патне ҫитсе килме тӑрӑшатӑпах.

...Хальхинче те каҫ пулчӗ. Никамӑн та ҫутӑ ҫук – ир выртаҫҫӗ пулас. Майӗпен анаталла утатӑп, ҫутӑ куратӑп. Хаваспах хапха алӑкне уҫса кӗретӗп. Мана курсан ватӑ ҫын сӑнӗ ҫуталать.

– Кӗме юрать-и? Тамар аппа, ҫывӑрмастӑн-и?

– Килех, хӗрӗм, килех. Эй, мӗнле килме пӗлтӗнех? – выртнӑ ҫӗртен тӑрса ларать вӑл. Аллинче – кӗнеке. Юнашар, ӑшӑ кӗрӗк ҫанни ҫинче, "пӗчӗк сӑпка", унта кушак ҫури тутлӑн тӗлӗрет. Эпӗ хулӑн кӗнекене тытса пӑхатӑп. "Хветуҫҫа". Василий Алентей.

Тӗл пулсан эпир унпа вӑхӑт ҫине пӑхмастпӑр. Кӗнекери сӑнарсене сӳтсе яватпӑр, пурнӑҫ ҫинчен калаҫатпӑр.

Йӳҫкасси ялӗнчен качча килнӗ вӑл. Терен пичче чипер хӗре тӳрех куҫ хывнӑ. Ачи-пӑчи те йышлӑ пулнӑ вӗсен. Хӑйӗн вӑрӑм ӗмӗрӗнче ҫак хӗрарӑм мӗн кӑна тӳсмен пуль? Итленӗҫем итлес килет ӑна – йӑлтах астӑвать.

Амӑшне "хитре Марфа" тесе чӗннӗ. Вӑл Канаш районне кӗрекен Кӑшнаруй ялӗнче ҫуралнӑ. Николай Терентьев драматургӑн тӑванӗ пулнӑ вӑл. Ашшӗ – Емельян, Йӳҫкасси пуянӗсен йӑхӗнчен тухнӑскер. Хайхи авланма шухӑш тытать. Арӑм тума пурте куҫ хывнӑ Марфана суйлать.

Анчах хӗр патне каҫункка кӑсӑр килме хушман ӑна. Емельян каҫункка ҫӗклет те – Кӑшнаруй ялне вӗҫтерет. Марфа арча тирпейленӗ, парнесем хатӗрленӗ ӗнтӗ. Килтисем сӑра пичкисене тултарнӑ, кукӑль-икерчӗ пӗҫернӗ. Кӳршӗ-аршӑ та чупкалать анчах. Туй арӑмӗсем шӳлкемесем ҫакнӑ...

– Каҫункка пар! Унсӑр хӗр памастпӑр, – теҫҫӗ хапха умӗнчисем.

Емельян вӗсен ыйтӑвне тивӗҫтерет, анчах ӑна яхӑнне те ямаҫҫӗ. Йӑли ҫапла, мӗнле унсӑр?

– Ку – сахал! – пӗррепе ҫырлахмаҫҫӗ хайхисем.

– Тепринсӗр хӗр парса ямастпӑр! – пӗлтереҫҫӗ татӑклӑн.

– Урӑх ҫук, – тет пулас кӗрӳ. – Мана пӗрре ҫеҫ каланӑ...

– Апла пулсан Марфана парса ямастпӑр – чӑркӑшаҫҫӗ хӗр енчисем. – Хӑть те ӑҫтан тупса пар. Емельян нумай шухӑшласа тӑмасть:

– Эппин, хӗрне мӑн кӗрӳрен парса ярӑр, – тет те ҫаврӑнса утать...

– Мана хама та "хитре Тамар" тенӗ, мӗншӗн тесен эпӗ анне сӑнӗллӗ, – тет Тамар аппа. – Питӗ хӗпӗртеттӗм куншӑн.

– Мӗнле вӗҫленнӗ вара вӗсен туйӗ? – ыйтатӑп эпӗ.

– Атте ҫаврӑнса тухса каять, вӗри пулнӑ ӗнтӗ, айван та ҫамрӑкскер, – малалла каласа кӑтартать кил хуҫи хӗрарӑмӗ. – Пӗр ҫынна тӗл пулать, лешӗ мӗн пулнине ыйтса пӗлнӗ хыҫҫӑн аттене каялла ҫаврӑса пырать. Ара, аннен епле тӳсмелле-ха ҫакна? Вӑл айӑплӑ та мар-ҫке.

Инкеке, амӑшӗн ӗмӗрӗ кӗске пулнӑ. Хӗрӗхе ҫывхарсан пилӗк ача амӑшӗ ҫил-тӑманлӑ ҫанталӑкра шӑнса вилет. Амӑшӗсӗр ӳснӗ ачасен пурнӑҫӗ – пылак мар паллах.

– Калаҫса ывӑнмарӑр-и? – тет Надя пирӗн умма вӗри чей лартнӑ май. Кӗҫех Оля сӗтел ҫине ҫырла кукли касса хурать. Пурте пӗрле, вӑхӑт ҫинчен мансах, сӑмах ҫӑмхине малалла сӳтетпӗр...

**Лидия САРИНЕ.**

# Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи пӗремӗк

Манӑн пӗрремӗш вӗрентекен Христина Терентьева 1929 ҫулхи нарӑсӑн 12-мӗшӗнче Ҫӗрпӳ районӗнчи Энӗшкассинче ҫуралнӑ. 1944 ҫулта ҫичӗ класс пӗтернӗ хыҫҫӑн Ҫӗрпӳри педагогика училищине вӗренме кӗнӗ. Кайран ӑна Октябрьски районӗнчи Малти Пукаш ялне ӗҫлеме янӑ.

Унтанпа 68 ҫул иртсе кайрӗ, анчах та эпӗ паянхи кунччченех вӑл пире мӗнлерех кӑмӑлпа пӗрремӗш хут пӗрремӗш класа кӗтсе илнине астӑватӑп.

Эпир, вӑрҫӑ ҫулӗнчи ачасем, шкула тӗрлӗ ҫулта ҫӳреме пуҫларӑмӑр: кам тӑххӑрта, кам вуннӑра. Ҫавӑнпа пирӗн класс пысӑкчӗ – 33 ача. Вӑл вӑхӑтра пирӗн тӑрӑхра ҫутӑ та, радио та ҫукчӗ, тен, ҫавӑнпа-и – вӗрентекенӗн пӗрремӗш калаҫӑвне питӗ лайӑх астӑватӑп. Каласа хӑвармалла: шкула кайиччченех эпӗ аппа-пиччерен саспаллисем паллама вӗреннӗччӗ, 100 таран шутлама пӗлеттӗмччӗ. Ҫакӑ мана пурнӑҫра нумай пулӑшрӗ. Иккӗмӗш пичче Анатолий эпӗ шкултан килсен манӑн вӗренӳпе кӑсӑкланса тӑратчӗ.

Христина Терентьевна мана час-часах тӗслӗх вырӑнне хуни те кӑмӑллӑччӗ. Ҫапла эпир, ахаль хресчен ачисем, пӗрремӗш вӗрентекенӗмӗр пулӑшнипе вулама-ҫырма хӑнӑхрӑмӑр.

Вӗрентекен доска ҫине хитре почеркпа саспаллисем, сӑмахсем ҫыратчӗ, эпир те ун хыҫҫӑн илемлӗ авкалама тӑрӑшаттӑмӑр... Тарӑн ҫырмасенче пӑр та ирӗлсе пӗтместчӗ-ха, эпир вара ҫаран шкул ҫумӗнчи сӑртра чупаттӑмӑр, тӗрлӗ вӑййӑ шутласа кӑларатттӑмӑр. Юратнӑ вӗрентекенӗмӗр те пирӗнтен юлмастчӗ, яланах пӗрлечӗ. Христина Терентьевна час-часах калаҫусем ирттеретчӗ. Ӳссен кам пулма ӗмӗтленнипе интересленетчӗ. Мана вӑл темшӗн агроном пулма сӗнетчӗ. Анчах эпӗ пачах урӑх професси суйларӑм, строитель, промышленноҫ экономисчӗ пулса тӑтӑм.

Тӑваттӑмӗш класра чухнехи аса килчӗ: пӗррехинче, пуш уйӑхӗ вӗҫленес умӗн, Христина Терентьевна пире физкультура урокӗнче йӗлтӗрпе чупассипе ӑмӑрту пулассине пӗлтерчӗ. Эпир килте тунӑ йӗлтӗрсене шкула йӑтса килтӗмӗр. Христина Терентьевна маршрутпа паллаштарчӗ. 18 арҫын ачаран эпӗ тӑваттӑмӗш кӑна пултӑм. Кӳреннипе макӑрсах ятӑм, Вартун Коли мана тӗртсе яни ҫинчен те каларӑм, мӗншӗн тесен 1-3-мӗш вырӑнсене ҫӗнсе илнисене вӗрентекен темиҫешер пӗремӗк шантарнӑччӗ-ҫке. Ҫакна шута илсе Христина Терентьевна ман пата пычӗ те: "Ан макӑр, Альберт, санӑн аван пулӗ малашне, хальхинче вара чӑнах та тӑрӑшнӑшӑн сана пурпӗрех икӗ пӗремӗк паратӑп", – терӗ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ку икӗ пӗремӗк маншӑн питӗ хаклӑ кучченеҫ пулнӑ.

Ҫавӑнтан пуҫласа вара йӗлтӗрпе тӑрӑшсах ӑмӑртма пуҫларӑм. Октябрьскинчи вӑтам шкулта вӗреннӗ вӑхӑтра – 3-мӗш, Сӗнтӗрвӑрринчи строительство техникумӗнче ӑс пухнӑ чухне – 2-мӗш, хӗсметре тӑнӑ вӑхӑтра 1-мӗш разряд илтӗм.

Халӗ те ҫулсерен иртекен "Раҫҫей йӗлтӗр йӗрӗ" ӑмӑртӑва хутшӑнатӑп. Юлашки виҫӗ ҫулта кашнинчех аслӑ ҫултисен хушшинчи пӗрремӗш вырӑн йышӑнма май пулчӗ.

Христина Терентьевна тӑрӑшнипе эпир пурнӑҫра тӗрӗс ҫул суйларӑмӑр. Илемлӗ литературӑпа, спортпа туслашрӑмӑр, обществӑшӑн, производствӑшӑн юрӑхлӑ ҫын пулса тӑтмӑр.

Пӗр класра вӗреннисемпе тӗл пулсан пӗрремӗш вӗрентекене ӑшшӑн аса илетпӗр. Пирӗнтен ӗҫчен те тӳрӗ ҫынсем ҫитӗнни – унӑн тивӗҫӗ.

Вӑл хӑйӗн кӑмӑллӑ мӑшӑрӗпе Александр Никитинпа пилӗк ача ҫуратса ӳстернӗ. Вӗсем халӗ пурте тӗрлӗ ҫӗрте ӗҫлеҫҫӗ.

Христина Терентьевӑн мӑшӑрӗ 1975 ҫулта йывӑр чирлесе вилчӗ. Ун хыҫҫӑн вӑл шкултан кайнӑ, совхозра хӑмла ӳстерсе пуҫтаракансен бригадинче тӑрӑшса ӗҫлеме тытӑннӑ.

Хисеплӗ ят та нумай унӑн. 1964 ҫулта вӑл "Ача амӑшӗ героиня", 2006 ҫулта "Ӗҫ ветеранӗ" ятсене тивӗҫнӗ. Ҫӗнтерӳ юбилей медалӗсемпе чысланӑ.

**Альберт КОЛЬЦОВ.**
Сӗнтӗрвӑрри районӗ.

ХӲТЛӖХ

# Пулӑшу алли тӑсакансем

Пурӑнӑҫ... Кама мӗнлерех шӑпа кӗтет ҫӗр ҫинче? Пӗри – ҫут тӗнчене килнӗ чухнех, тепри тӗрлӗ сӑлтава пула каярахпа аманса сусӑрланса юлать. Кун пек ҫынсене ытларах тимлӗх кирлине пурте пӗлетпӗр. Сусӑрсене хавхалантарса пыма пӗлекенсем пурри саватӑрать.

Вулакана Пӗтӗм Раҫҫейри куҫ курманнисен пӗрлешӗвӗн Кусллавккари организацийӗнче ӗҫлекенсем пирки каласа кӑтартас килет. Унӑн ертӳҫи Е.Морева тата унӑн заместителӗ И.Демьянова куҫ курманнисемшӗн питех те нумай ырӑ ӗҫ тӑваҫҫӗ. Ҫулӗсемпе ҫамрӑках мар пулин те, ҫанталӑкӑн тӗрлӗ пулӑмне пӑхса тӑмасӑр – йӗпе юр е ҫумӑр ҫӑвать-и, ҫилтӑман алхасать-и – кашни уйӑх вӗҫӗнчех сусӑр ҫынсем патне васкаҫҫӗ вӗсем. Куҫ курманнисемпе, аманса сусӑрланнӑ ҫынсемпе тӗлпулусем ирттереҫҫӗ. Вӑрмарпа Куславкка районӗнчи вырӑнти организаци 23 ҫул каялла пӗрлешнӗ. Икӗ районта куҫ курманнисем 175 ҫын, ҫав шутран 81-шӗ – пирӗн тӑрӑхран. Аманса сусӑрланнисен шучӗ хамӑр районта – 1799 ҫын. Ырӑ кӑмӑллӑ ҫынсем вара вӗсемпе тӗлпулма яланах вӑхӑт тупаҫҫӗ. Вӗсен пурнӑҫӗпе интересленеҫҫӗ, кирлӗ пулсан пулӑшу кӳреҫҫӗ.

**Валентина ХРИСТОФОРОВА.**
Вӑрмар районӗ.

***Хисеплӗ вулакансем!***
**"Хыпар" Издательство ҫурчӗн кӑларӑмӗсене 2016 ҫулӑн I ҫурринче илсе тӑмашкӑн**
**июль уйӑхӗнчен тытӑнса август уйӑхӗн 31-мӗшӗччен –**
**ЙӲНӖ ХАКПА!**
**"ХЫПАР" – 625,62 тенкӗ**
*/кӑҫалхи II ҫур ҫултинчен 172,44 тенкӗ йӳнӗрех/*
**"Хыпар"-эрнекун – 325,92 тенкӗ**
*/19,62 тенкӗ йӳнӗрех/*
**"ЧӐВАШ ХӖРАРӐМНЕ" 343,8 тенкӗпе ҫырӑнтараҫҫӗ**

ВĔРЕНӲ

# Яковлев халалне ăша хывса

**Иван Яковлев халалне малашне вырăс шкулĕсенче те вĕрентĕç. 8-мĕш классем валли черетлĕ хутчен хатĕрлекен "Раççей историйĕ. XIX ĕмĕр" учебникре чăваш халăхне çутта кăларакан Иван Яковлев çинчен çырни те темиçе абзац пулĕ. Халалпа паллашма вара вырăс ачисене килти ĕç хушĕç.**

Çакна Раççей президенчĕ çумĕнчи Чăваш Енĕн полномочиллĕ представителĕпе Леонид Волковпа тĕл пулсан педагогика ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор, учебникĕн авторĕсенчен пĕри Георгий Гогиберидзе пĕлтерчĕ.

Рособрнадзор эксперчĕ пулнă май, профессор республикăри вĕренӳ тытăмĕн ĕçĕ-хĕлне лайăх пĕлнине пытарман. Пирĕн шкулсенчи пĕлӳ шайне аван хак панă вăл. Леонид Волков Георгий Гогиберидзепе калаçнă май чăваш халăхĕн историйĕпе, культурипе паллаштарнă. Республикăна çеç мар, Раççее те чапа кăларнă чăваш ывăл-хĕрĕ çинчен каласа кăтартнă. XIX-мĕш ĕмĕрти историпе кăсăкланакан специалиста аслă вĕрентекенĕмĕр çинчен каласа кăтартнисем уйрăмах килĕшнĕ. Атăл тăрăхĕнчи ялсенче 1200 шкул уçнăскер, чăваш халăхне юратупа килĕшӳре пурăнма пилленĕскер тăван çĕршывăмăр историне вĕренмелли кĕнекене кĕме тивĕçлипе килĕшнĕ учебник авторĕ. Çавăн пекех вăл полпред Иван Яковлевичăн халалне яшсемпе хĕрсене килте вулама сĕннине те ырланă.

**Татьяна НИКОЛАЕВА.**

КУЛЬТУРА

# Ялсенче кино кăтартĕç

**Чăваш Республикинчи электрон тата кинодокументаци патшалăх архивĕ наци культурине упраса хăварас тата аталантарас тĕлĕшпе хастар ĕçлет. Грант выляса илни ăна çĕнĕ проектсене пурнăça кĕртме пулăшать.**

Нумаях пулмасть архив ĕçченĕсем общество пурнăçне лайăхлатас тĕллевпе йĕркелекен конкурсăн регион шайĕнчи тапхăрне хутшăннă. Жюри членĕсем Чулхула, Владимир, Вологда облаçĕсенчи, Чăваш, Мари, Мордва республикисенчи организацисем сĕннĕ 276 проекта пăхса тухнă. Республикăри электрон тата кинодокументаци патшалăх архивĕ хатĕрленĕ "Аслă Çĕнтерӳ 70 çул тултарнине тата Литература çулталăкне халалланă литература произведенийĕсемпе паллаштаракан ял тăрăхĕнчи кинофестиваль" пултарулăх проект çĕнтерӳçĕсен йышне кĕнĕ.

Архив фондĕнче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çинчен ӳкернĕ илемлĕ тата документ фильмĕсем упранаççĕ. Вĕсене куракансем хапăлласа йышăнни куçкĕрет. Грант укçипе архив çĕнĕ кинолентăсем туянасшăн. Фондри ĕçсене ял тăрăхĕсене илсе çитересшĕн. Хальлĕхе çакăнти фильмсене Шупашкар халăхне кăна кăтартнă. Çакă, паллах, çителĕксĕр. Кĕçех ятарлă оборудовани вырнаçтарнă "Киномобиль" культура центрĕ çула тухĕ. Вăл электричество çук вырăнта та фильм кăтартма май парĕ.

Кинофестивале юпа уйăхĕнче ирттересшĕн. Архив фондĕнчи фильмсене тӳлевсĕр кăтартĕç.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

ПАТШАЛĂХ ПУЛĂШĂВĔ

# Йышлă çемье çĕр илесшĕн

**Республикăри демографи лару-тăрăвĕ лайăхланса пынине палăртма кăмăллă. Ачаллă çемьесене патшалăх май пур таран пулăшни уйрăмах пĕлтерĕшлĕ.**

Виçĕ тата ытларах ачаллă çемьене, тĕслĕхрен, тӳлевсĕрех çĕр лаптăкĕ виçсе параççĕ. Пирĕн тăрăхра ку программа тăвattăмĕш çул пурнăçланса пырать. Харпăрлăхри лаптăкра çурт хăпартма е хушма хуçалăх йĕркелесе яма юрать.

Кăçалхи авăн уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне республикăри нумай ачаллă 6242 çемье çĕр илме кăмăл тунă. 2011 çултанпа 3450-не сертификат панă та ĕнтĕ. Вĕсем валли 411 гектар çĕр уйăрнă. Ытларахăшĕ çак лаптăкра çурт хăпартма пуçланă.

Пысăк çемьесене çĕр уйăрса парас тĕлĕшпе Улатăр, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă районĕсем малта. Унта кашнин ыйтăвне çийĕнчех тивĕçтернĕ. Пăрачкав, Етĕрне, Куславкка, Йĕпреç, Красноармейски районĕсем те хастар ĕçлеççĕ. Унта та çĕр илес текенсен черечĕ пĕчĕк.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

ÇУТÇАНТАЛĂК

# Атăлта çĕкĕ йышланчĕ



**Шупашкар шыв управне Хĕрлĕ кĕнекене кĕртнĕ 10 пин вĕтĕ çĕкĕ кăларса янă.**

Вĕсене пулă предприятийĕнче 4 уйăх çитĕнтернĕ. Кашниех 10 грама яхăн, 10-12 сантиметр тăршшĕ пулнă. Тепĕр 5-8 çултан çĕкĕ вăлча сапĕ. Çак пулă 120 сантиметр тăршшĕ çитĕнме, 30 çул пурăнма пултарать.

Ихтиофаунăна йĕркене кĕртмешкĕн гидроэнергетиксене Çĕнĕ Шупашкарти çул çитмен ачасен социаллă реабилитаци центрĕнче пурăнакансем пулăшнă. Экологи акцийĕ вĕсене çутçанталăка упрама вĕрентĕ.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

ТĔРĔСЛЕВ

# Мĕнле пăтă пĕçеретпĕр?

**Кĕрперен хатĕрленĕ апат-çимĕç вăй-хал тата усăллă япаласен çăлкуçĕ пулнине кашниех пĕлет ĕнтĕ. Хĕлле пăтă уйрăмах ытларах теççĕ – углеводпа пуянскер пирĕн организма кĕрĕкрен япăх мар ăшăтма пултарать иккен. Специалистсен шухăшĕпе, нумай кĕрпе организмран холестерин кăларма пулăшать, чĕре, çавăн пекех пĕвер, хырăмлăх-пыршăлăх ĕçне лайăхлатать.**

Паллах, пахалăхлă кĕрпе çеç усă кӳрет. Шел те, лавккасенчи сентресем çинчи пур тавар пирки те çапла калаймăн. Россельхознадзорăн республикăри управленийĕнчи инспекторĕсем кăçалхи çур çулта кăна пахалăхсăр тата сывлăхшăн хăрушă 0,189 тонна кĕрпе тупса палăртнă. 0,157 тонна утилизациleме тивнĕ. Сăмахран, хăвăрт пиçекен хура тула /0,057 тонна/ ГОСТ требованийĕсене тивĕçтермен. Унсăр пуçне унта сăтăрçăсем пулнă, нӳрĕк кирлĕ шайра мар. Рис кĕрпинче /0,1 тонна/ вара сăтăрçăсем те /хурт-кăпшанкă/, органика хутăшĕсем те пулнă.

Кунсăр пуçне кĕрпен хăрушсăрлăхне тата пахалăхне çирĕплетекен документсемсĕр сутнă кун йышши тавара. Маркировка та пулман сутуçсен. Кунашкал документпа тивĕçтермен продукци пахалăхсăррисен шутне лекет, мĕншĕн тесен кĕрпе ăçтан килнине тата хăçанччен усă курма юрăхлине пĕлме çук. Çынсен сывлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратать тесе шутлаканскертен вара хăтăлмалли çеç юлать.

Тырă тата унран хатĕрленĕ продукцие тĕрĕс упрасси пĕлтерĕшлĕ, анчах та çакна пур çĕрте те пăхăнмаççĕ курăнать. Сывлăш нӳрĕклĕхне тата температурине виçмелли хатĕрсене пурте вырнаçтарман, техника тата санитари енчен те çитменлĕхсем пур.

Пĕтĕмпе кăçалхи пĕрремĕш çур çулта тырă тата унран хатĕрленĕ продукцин хăрушсăрлăхĕ тата пахалăхĕ енĕпе 110 тĕрĕслевпе сăнав мероприятийĕ ирттернĕ, саккуна пăснă 107 тĕслĕх тупса палăртнă.

Пуринчен ытла вĕренӳ учрежденийĕсенчи япăх пахалăхлă кĕрпе шухăша ярать. Сăмахран, "Патăрьелти агропромышленноç техникумĕ" автономи профессии вĕрентĕвĕн учрежденийĕн складĕнчи риса нӳрĕклĕхĕпе тивĕçтерейменрен тата сăтăрçăсем пуртан тĕп тунă.

Комсомольски тата Йĕпреç районĕсенче ачасен вĕренӳ учрежденийĕсенчи должноçри çынсене административлă майпа явап тыттарма сăлтавсем тупăннă: маркировка тата кирлĕ ытти документ пулман.

Тĕрĕссипе, ку енĕпе тĕрĕслевсем вĕçленмен-ха. Çулталăк вĕçлениччченех ирттерĕç. Чăнах та, асăрхаттарусемсĕр май килмест.

Пĕлтĕр те, вĕренӳ 80 учрежденине тĕрĕсленĕ май, 3,7 тонна кĕрпе тĕлĕшпе упрамалли тата усă курмалли условисене пăснине тупса палăртнă. Должноçри 80 çынна яваплăх пирки аса илтерме тивнĕ: çӳлерех асăннă кирлĕ документсем пулманни – пĕрре, сиенлĕ куракăсем тата сăтăрçăсем тупни – тепĕр сăлтав.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА, Раççей ялхуçалăх надзорĕн республикăри управленийĕн ĕçченĕ.**

ПУШАР ХУРАЛĔ ПĔЛТЕРЕТ

# Ан алхастăр «хĕрлĕ автан»

Виçĕмкун кăнтăрла иртни икĕ сехет тĕлĕнче Элĕк районĕнчи Тени ялĕнче ачасен харсăрлăхне пула лупас çунма тытăннă. "Хĕрлĕ автан" алхасма пуçланин тĕп сăлтавĕ – 7-ри арçын ача утă çинче шăрпăкпа вылянă. Телее, сĕрĕм тухнине кӳршĕсем асăрханă. Пушарнăйсем те вăхăтра çитсе юнашар ларакан икĕ çурта, гаражпа кӳршисен хуралтисене сыхласа хăварма пултарнă. Аманнисем çук. Каярах ашшĕ-амăшĕ ывăлĕ картишĕнче утă-улăм тивертме тытăнни ку пĕрремĕш тĕслĕх маррине те каланă.

Кĕçнерникунах Канаш районĕнчи Чăрăшкассинче 63 çулти арçын хуçалăхĕнче йывăç мунча çунма тытăннă. Вăл Вăрманкас Ухман ял тăрăхĕнчи пушарнăйсен куçĕ тĕлне пулнă, анчах мунча юрăхсăра тухма ĕлкĕрнĕ. Ку тĕслĕхре çулăм тухнин сăлтавĕ кăмакана стена çумне йĕркене пăхăнмасăр вырнаçтарнипе çыхăннă тесе шухăшлаççĕ.

Çав кунах Йĕпреç районĕнчи Çăкалăхра пурăнакан ватăсем мунчасăр тăрса юлнă. Сăлтавĕ – электрооборудованипе тĕрĕс мар усă курнинче. Кил хуçи арăмĕ лаççинче кипятильник чикнĕ те пăхса тăма маннă. Тĕтĕм мăкăрланнине юрать-ха кӳршисем асăрханă, тӳрех пушарнăйсене шăнкăравланă.

Çулталăк пуçланнăранпа республикăра 596 пушар алхаснă, 50 миллион тенкĕлĕх тăкак кӳнĕ. Вĕсенче 57 çын пурнăçĕ таталнă, 71-шĕ аманнă. 231 çын пурнăçне çăлма май килнĕ.

Пушарнăйсем пурне те асăрханулă пулмаллине аса илтереççĕ. Çакна та астумалла: йывăç 300 градуса çити ăшăнсан çунма тытăнать. Анчах та пĕрмай 100 градус вĕрипе сĕртĕнсен хăйне-хăй хĕрме тытăнать, мăкăрланма та пуçлать. Çавăнпах мунчара хăть те мĕнле кăмакана та унăн пайĕсем çăмăллăн хĕрекен-çунакан материала перĕнмелле мар вырнаçтармалла.

Кăмака хутнă чухне те йĕркене пăсма юрамасть. Вутта çăмăллăн тивекен шĕвексемпе сапмалла мар. Кăмакана пăхсах тăмалла, ăна хутма ачасене шанмалла мар. Кăмака çăварĕ усă пулмалла мар – питлĕх кирлех.

**Татьяна НАУМОВА.**

# Кирилл Патриарх килни Чăваш Ен историне ылтăн саспаллисемпе çырăнчĕ











/Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава хăйĕн саламлă сăмахĕнче республика çыннисем Кирилл Святейший Патриарх килессе кĕтни, çакăншăн кĕлтуни çинчен каларĕ. «Пире Турă ăслă та тӳрĕ чунлă Святителе ярса пачĕ. Пĕтĕм Раççей тĕне ĕненсе пурăнтăр тесен пирĕн те, Эсир хушнине пурнăçлакансен, Сирĕнтен тĕслĕх илсе нумай ĕçлемелле», – терĕ вăл.

«Раççейĕн тĕрлĕ регионне, чикĕ леш енне çитнĕ май эпĕ чиркӳ пурнăçĕ куç умĕнчех улшăннине сăнатăп. Чиркӳре çамрăксене, ачасене, вырсарни шкулĕсенче вĕренекенсене, пил илме килекен çамрăк мăшăрсене, тĕпренчĕкĕсене тĕне кĕртекенсене курсан чун савăнать. Çакă пирĕн халăхра Православи тĕнĕ чĕрĕ пулнине кăтартать. Ку асфальт çул çуркаланчăкĕнче симĕс хунав вăй илнине аса илтерет», – сăмах илчĕ Кирилл Святейший Патриарх. Ырра шанни, ĕненни çынсене Турăпа çыхăнтарнине палăртрĕ хăна.

«Çакă йывăрлăха çĕнтерме, Турă юнашаррине туйса пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утма пулăшать. Турă сăмахне ăс-тăнпа тата чĕрепе йышăнсан кăна эпир вăйлăрах, ăслăрах пулăпăр, ун чухне пире никам та улталаймĕ.

Паян информаци технологийĕсем çын чунне, ăс-тăнне мĕнле витĕм кӳнине пĕлетпĕр. Çавăнпах Турă сăмахне ăша хывман çынсем такама кирлĕ пек пурăнма пултараççĕ. Эпĕ сире ĕненĕве упрама сунатăп», – вĕрентсе каларĕ Кирилл Святейший Патриарх.

Вырăс Православи чиркĕвĕн Предстоятелĕ Шупашкар тата Чăваш митрополитне Варнавăна чăваш кафедринче нумай çул пурнăçласа пынă ĕçсемшĕн тав турĕ: «Эсир чăваш халăхне чунпа йышăннине тата Чăваш Ен Сире юратнине пĕлетĕп. Эсир нумайăшне, çав йышра тĕн çыннисене те, ăса вĕрентнĕ. Çав вăхăтрах опытпа пайланнă, пулăшнă. Чăваш Енре малашне те чиркӳ пурнăçĕ аталанса пынине курас килет. Чăваш Енре – тĕрлĕ нациллĕ республикăра – пурăнакансене Турă сăмахне чун-чĕрипе йышăнма тата çак сăмаха мала хурса хăйсен пурнăçне йĕркелесе пыма Турă пулăштăр.

Нумай нациллĕ халăх тĕрлĕ культурăна, тĕрлĕ чĕлхене, тĕрлĕ йăла-йĕркене хисеплесен çеç сыхланса юлма пултарать. Чăваш Енри тăнăçлăхпа лăпкăлăхшăн – Турра тав. Малашне те çапла пултăр».

Кирилл Святейший Патриарх Михаил Игнатьева республика Пуçлăхĕнче тăрăшса ĕçленĕшĕн тав туса хăварчĕ: «Эсир чиркӳ пурнăçне пысăк тимлĕх уйăратăр. Халăх ырлăхĕшĕн вăй хуни – чи пĕлтерĕшли. Малашне те çапла пулма Турă пулăштăр. Тата чиркӳпе патшалăх влаçĕ, чиркӳпе общество хушшинчи килĕшӳ тивлетлĕ çĕр çинчи халăха хăтлă пурăнма май патăр». Михаил Васильевича Турă Амăшĕн «Державная» турăшне асăнмалăх парнелерĕ вăл.

## Чăвашла кĕлĕ

Авăн уйăхĕн 2-мĕшĕнче, святой Илия пророка асăнса уявланă кун, Мускав тата Пĕтĕм Руç Патриархĕ Кирилл Апостолпа тан святой Владимир аслă кнеç ячĕпе Çĕнĕ Шупашкарта хăпартнă соборта Литурги турĕ. Вăл 3 сехете тăсăлчĕ.

Литурги хыççăн Варнава митрополит Кирилл Святейший Патриарха икĕ панагийăран тата хĕресрен тăракан комплект парнелерĕ. «Турă Сире сывлăх, вăй-хал, пулăшу патăр. Эпир те çакăншăн кĕлĕ тăвăпăр», – терĕ вăл.

Святейший Владыка пĕрлехи Аслă кĕлле асра хăварма Шупашкар тата Чăваш митрополитне Варнавăна Руç халăхне тĕне кĕртнĕ Апостолпа тан святой Владимир аслă кнеç вилнĕренпе 1000 çул çитнине халалласа хатĕрленĕ юбилейлă панагийăпа хĕрес парнелесе хăварчĕ.

«Эпĕ пурне те уяв ячĕпе саламлатăп, Владимир кнеçе халалласа лартнă çĕнĕ чиркӳре сирĕнпе пĕрле кĕлĕ тумашкăн Турă мана чăваш çĕрĕ çине илсе килнишĕн савăнатăп», – хушса каларĕ Унăн Святейшестви.

Çакăнтах Таса пурнăçлă Сергий Радонежский ячĕпе Шупашкарта собор лартас тĕлĕшпе витĕмлĕ пулăшу кӳнĕшĕн Мускав тата Пĕтĕм Руç Патриархĕ Святейший Кирилл Машинăсем тăвакан конструкторсен «Искра» бюро генеральнăй директорне Владимир Сорокина, акционерсен «ТУС» хупă обществин генеральнăй директорне Николай Угаслова, НПО «Элара» генеральнăй директорне Андрей Углова, ОАО «Дорисс» генеральнăй директорне Всеволод Рощина Вырăс Православи Чиркĕвĕн Таса пурнăçлă Сергий Радонежскийăн III степень орденĕпе чысларĕ.

Çĕнĕ Шупашкарти соборта ирттернĕ кĕлĕре виçĕ хутчен чăваш чĕлхи янăранине палăртмасăр иртеймĕн. Çакă та чунра мăнаçлăхпа савăнăç çуратать. Кĕлĕ сыпăкĕсене чăвашла черетпе Валерий атте, Гурий атте, Улан-Удэрен килнĕ Савватий митрополит вуларĕç.

## Чун паттăрĕсем

Мускав тата Пĕтĕм Руç Святейший Патриархĕ Кирилл Шупашкарти «Çĕнтерӳ» асăну комплексĕ умне шурă кĕлчечексем хучĕ, панихида ирттерчĕ.

«Тăван çĕршывăн регионĕсене çитмессерен Çĕнтерӳ ячĕпе хăпартнă монументсен умне чечексем хума тăрăшатăп. Хальхи ăрун çĕршыв тăнăçлăхĕшĕн пуç хунă паттăрсене асра тытмалла. Хăйĕн юлташĕсемшĕн чунне параканăн юратăвĕнчен пысăкрах юрату çук. Ку – Турă сăмахĕ. Çапăçăва ыткăнмалли тата вилĕмпе тĕлпулмалли вăхăтра Çӳлти Тĕрĕслĕхе ĕненни çеç хăранине çĕнтерме пулăшать, вăй парать.

Вилнĕ паттăрсем – Турă халалĕпе пурăннă çынсем. Çапăçу хирĕнче кăна палăртнине кăтартмасть çакă, вĕсем – чун, совеç паттăрĕсем.

Ветерансемпе уйрăммăн калаçас килет. Эсир историе никамран лайăх пĕлетĕр. Сирĕн сăмах темле кĕнекере çырнинчен те хăватлăрах, мĕншĕн тесен хăвăр курнине сăнласа кăтартни нимрен хаклăрах. Май пур таран çамрăксене вăрçă çинчен каласа кăтартăр», – хушса хăварчĕ хăна.

## Капсула хывни

Кирилл Святейший Патриарх Таса пурнăçлă Сергий Радонежский ячĕпе Шупашкарта лартакан чиркĕвĕн никĕсне асăну капсулине хывни – асра тытмалли тепĕр самант.

Пирĕнтен кашниех «Чиркӳ стени çинче – ят çырнă кирпĕч» ыркăмăллăх акцине хутшăнма пултарать. Нумайăшĕ строительствăна хăйĕн тӳпине хывнă ĕнтĕ. Хальлĕхе пухмачра – 6 миллион тенкĕ. Çавнашкалах республика предприятийĕсем те айккинче юлмаççĕ. Вĕсем чиркӳ хăпартма 15 миллиона яхăн тенкĕ куçарса панă.

Собор республикăра чи çӳлли тата чи пысăкки пулĕ. Унта харăсах пин çын Турăпа калаçмашкăн килме пултарĕ. Вăл республикăри тĕн аталанăвĕн центрĕ пулса тăрĕ.

«Таса пурнăçлă Сергий Радонежский Турăшăн та, Тăван çĕршывшăн та ĕçлесе пурнăçне ирттернĕ. Тăшманпа çапăçса халăх вăйĕ пĕтсе пынă вăхăтра тăван çĕре хӳтĕлеме вырăс кнеçĕсене пĕрлештернĕ вăл. Унăн витĕмĕпе Куликово хирĕнче тăшмана çапса аркатнă.

Çак храм кĕçех çĕкленессе ĕненетпĕр. Чиркӳсене кирлĕ чухне кăна хăпартаççĕ. Апла тăк çынсен чĕрисенче ĕненӳ, вĕсен чунĕсенче тĕн хăвачĕ валли вырăн пур.

Таса Сергий Радонежский кĕллипе Турă пĕтĕм Раççее, чăваш çĕрне, республика ертӳлĕхне упратăр», – ырă сунчĕ Святейший Патриарх.

«Кирилл Патриарх килни Чăваш Ен историне ылтăн саспаллисемпе çырăнса юлчĕ. Эпир республикăн ырă малашлăхĕшĕн тĕнпе çыхăнманнисемпе Турра ĕненекенсене çывăхлатма хушма хавхалану илтĕмĕр», – çапла каларĕ Михаил Игнатьев.

Правительствăра эрнесерен йĕркелекен канашлура палăртнă тăрăх, Кирилл Святейший Патриарх хутшăннă мероприятисене 16 пин ытла çын çитсе курнă.

«Вырăс Православи Чиркĕвĕн Предстоятелĕ регионти ларутăрăва пысăк хак пачĕ. Нумай нациллĕ республикăра вуншар çул обществăпа политика тăнăçлăхĕ сыхланса пынине палăртрĕ вăл. Пирĕн тĕллев – тĕнпе çынлăх йĕркисене упрасси, çамрăксене республикăри мирпе килĕшĕве хаклама вĕрентесси, вĕсене тĕрĕс воспитани парасси», – пĕтĕмлетрĕ Михаил Васильевич.

Кирилл Святейший Патриарх килсе кайни республикăра пурăнакан кашни çыннăн лайăхрах пурăнас шанăçне çирĕплетрĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА**
**хатĕрленĕ.**

# Медальсен шучĕ мар, пахалăхĕ пĕлтерĕшлĕ

**Спорт – пурнăçăн хĕрӳ те пысăк хăвăртлăхлă пайĕ. Ара, спортсменсем паян пĕр çĕршывра ăмăртаççĕ, ыран урăххине çитеççĕ. Ахальтен мар хăвăртрах, çӳллĕрех, вăйлăрах девизпа пурăнмаççĕ-тĕр. Шупашкарти "Олимпийский" стадионта çăмăл атлетикăн Раççей чемпионачĕ иртрĕ. Чи маттурисен ятне илтме тивĕçнисем часах, çурла уйăхĕн 22-30-мĕшĕсенче, Пекинра тĕнче чемпионатĕнче çĕршывăмăр чысне хӳтĕлĕç.**



Çăмăл атлетикăн пĕрлештернĕ командисен Европа чемпионачĕ хыççăн, тен, çĕршыв шайĕнчи тупăшу сумĕпе, хĕрӳлĕхĕпе пĕчĕкрех туйăнчĕ-тĕр, çапах та спортсменсене алă çупса хавхалантарма çын самай пухăнчĕ.

Палăртнă пекех тунтикун уçăлчĕ чемпионат. Унта ЧР Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев, РФ çăмăл атлетика федерацийĕн ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлакан Вадим Зеличенок, унăн заместителĕ Татьяна Лебедева, федерацин тĕп секретарĕ Михаил Бутов, Раççейĕн пĕрлештернĕ командин тĕп тренерĕ Юрий Борзаковский, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников, пирĕн паллă Олимп чемпионĕсем Елена Николаевăпа Валентина Егорова тата сумлă ытти хăна хутшăнчĕ.

Михаил Игнатьев спортăн çак уявĕпе саламланă май чи малтанах Раççейри çăмăл атлетика федерацийĕн ертӳçисене чемпионата каллех пирĕн патăмăрта ирттерме шаннишĕн, чăваш халăхне черетлĕ хутчен уяв туса панишĕн тав турĕ. Аса илтеретпĕр: юлашки ултă çулта тĕп хуламăр наци тĕп стартне тăваттăмĕш хутчен йышăнать.

– Паянхи ăмăртура пултаруллисемпе пĕрлех çамрăк спортсменсем те хăйсен ăсталăхне тĕрĕслĕç. Пекинра иртекен тĕнче чемпионатне хутшăнма атлетсене шăпах пирĕн республикăра суйласа илни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чăваш Ен тĕнче аренине çул хывнине кăтартать çакă, – терĕ Михаил Игнатьев спортсменсене ăнăçу сунса. "Спорт королеви" чăвашсемшĕн ĕлĕкренех çывăх пулнине палăртрĕ вăл.

Вадим Зеличенок сăмах илнĕ май малтанах шăпах çакăнта командăсен Европа чемпионачĕ пирĕншĕн ăнăçлă иртнине, çавăнпах каллех "Олимпийский" стадионта тăма кăмăллине палăртрĕ.

– Эпир каллех кунта! Иртнинче стадион тулли пулни, халăх спортсменсене хавхалантарма ăнтăлни тĕлĕнтернĕччĕ. Яланах çапла пултăр, – сунчĕ вăл.

Çакнашкал уявсенче спортсменсемшĕн "чирлеме" пуçăнни çав тери пĕлтерĕшлине Раççейĕн пĕрлештернĕ командин тĕп тренерĕ Юрий Борзаковский те каларĕ.

– Çĕртме уйăхĕнче иртнĕ командăсен Европа чемпионатĕнче эсир тăвăллăн алă çупни-хĕпĕртени хăйĕн çимĕçне пачех – эпир çĕнтертĕмĕр. Хальхинче те çаплах пуласса шанас килет, – терĕ Юрий Михайлович.

Каярах, журналистсемпе калаçнă чухне, вăл Шупашкарти стадион çывăх та тăван пулса тăнине пытармарĕ.

– Кунта ăмăртма та кăмăллă. Çав вăхăтрах вăл ăнăçлă та. Европа чемпионачĕ те савăнтарчĕ. Халĕ Раççей чемпионачĕ кăмăла уçасса, тĕнчеринче лайăх кăтартусемпе палăрма аван тĕртĕм парасса шанатпăр, – пĕлтерчĕ тĕп тренер.

Шупашкарти стадион хăйĕншĕн те ăнăçлă пулнине вăл чемпионат умĕн эрнекун иртнĕ пресс-конференцире те палăртрĕ.

## Пĕчĕк хула уявĕ

– Чăваш Ен хăть те мĕнле шайри ăмăртусене те – Раççей, Европа, тĕнче Кубокĕ – лайăх йĕркелеме пултарнипе тĕслĕх кăтартать. Пысăк ăмăртусене пĕчĕк хуласенче ирттерни тĕрĕс те. Тен, кирлĕ те. Пысăк, Мускав пек хуласем, кунашкал мероприятисенчен ывăннă ĕнтĕ. Пĕчĕк хуласемшĕн вара вĕсем – чăн-чăн уяв. Аслисем ывăлхĕрĕпе килсе-пăхса савăнаççĕ. Олимп мар, шăпах пуçламăш шайри спортсменсене сăнаса ачасем вĕсем пеккисемех спортпа туслашса, лайăх кăтартусемпе палăрса чемпиона çитнине хăйсен куçĕпе кураççĕ. Çак атмосфера физкультурăпа туслашма хавхалантартăр, – терĕ Олимп чемпионĕ Татьяна Лебедева журналистсемпе калаçнă май.

РФ çăмăл атлетика федерацийĕн тĕп секретарĕ Михаил Бутов вара командăри паянхи лару-тăрупа паллаштарчĕ.

– Олимпиада умĕнхи çулталăкра никама та çăмăл мар. Опытлисем вырăнне çамрăксем килнипе те, хăшĕ-пĕри йывăр суранланнă е ача çуратнă хыççăн спорта таврăнма ĕлкĕрейменнипе те çыхăннă çакă. Тепĕр çул йыш хутшăнасса шанатпăр. Çамрăксемпе ĕçлемелли те нумай-ха – çĕнĕ ятсем уçăлса пынине куратпăр, – палăртрĕ федерацин тĕп секретарĕ.

## Çăлтăрсем "çутатрĕç"

Виçĕ кунра "Олимпийский" стадионта çăмăл атлетсем медальсен 38 комплектне салатрĕç. Вĕсемпе пĕрлех – Пекинта иртекен тĕнче чемпионатне каймалли путевкăсене те. Чи лайăх 800-е яхăн спортсмен Шупашкара Раççейĕн 64 регионĕнчен тата Казахстанран килсе çитрĕç. Вĕсен йышĕнчен 33-шĕ – РФ спортăн тава тивĕçлĕ, 169-шĕ – тĕнче класлă мастерĕ.

Ăмăртăвăн пĕрремĕш кунĕнчех медальсен 7 комплектне салатрĕç. Чăваш Ен чысне хӳтĕлекен Анжелика Сидорова "ылтăнĕ" пирĕншĕн чи пĕлтерĕшли пулса тăчĕ. Тепĕр тесен, унăн ăна илессишĕн ытлашши тăрăшма та тивмерĕ. Шăчăпа сикмелли сектора вăл чи юлашки тухрĕ – ăмăртăва пурте вĕçлесен çеç. Унăн черечĕ çитессе стадиона пухăннисенчен чылайăшĕ чăтăмсăррăн кĕтрĕ. Ара, куракансен пысăк йышĕ шăпах шăчăпа сикекенсен секторĕ умне вырнаçрĕ. 4.50 метра пĕрремĕш хутĕнченех парăнтарчĕ те çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ Анжелика. Çавăнпах 4.65 метра сикме ăнтăлмарĕ те. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăннă Татьяна Швыдкина /Мускав, Брянск обл./ тата Ольга Муллина /Мускав, Белгородск обл./ 4.35 метр çӳллĕшне çеç парăнтарчĕç.

– Чăн-чăн тупăшу пулайманни кăмăлсăрлантарать те. Эпĕ ăмăртăва яланах 4.50 метртан пуçлатăп. Çавăнпа та тĕлĕнмелли çук кунта. 4.70 таран ăмăртасса шаннăччĕ. Пулмарĕ. Пĕрре сиксе тӳрех çĕнтерни манăн пурнăçра – пĕрремĕш хут. Пекинра хамăн рекорда çĕнетме тăрăшăп, çак тĕллеве пурнăçласан савăннă пулăттăм, – кăмăлне пытармарĕ маттур ентешĕмĕр.

Пĕрремĕш кунах ăмăрту лапамне çăмăл атлетикăн тĕнче шайĕнчи çăлтăрĕсем те "çутатрĕç". Çӳллĕшне сикме Анна Чичерова тухрĕ. Паллах, вăл пĕрремĕш пулса тăчĕ. Пĕтĕм çӳллĕшне, 2 метра та, вăл пĕрремĕш хутĕнчех парăнтарчĕ. Олимп чемпионки команда йышне Шупашкара килмесен те кĕме пултарнă-ха, вăл ку сезонра тĕнчипе чи лайăх кăтартура палăртнă – 2.04 метр. Анчах чемпион Шупашкара килме кăмăл тунă. Паллă спортсменка Шупашкарта иртнĕ чемпионата тăваттăмĕш хутчен хутшăнать, кашнинчех чи лайăх кăтартупа вĕçлет ăна.

– Хам çĕнтернипе кăмăллă эпĕ. Анчах чи пĕлтерĕшли – эпĕ каллех сикетĕп. Пĕлтĕр урана амантнине пула спорта таврăнасси иккĕленӳллĕччĕ. Шупашкарта мана яланах ăнать, çавăнпах кунта чун туртать, – терĕ чемпион.

Сăмах май, унăн мăшăрĕ Геннадий Черновал Çĕрпӳ тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ, вăл та спортсмен, кĕске дистанцисене чупас енĕпе Казахстан тата Ази чемпионĕ.

Çӳллĕшне сикекенсен хушшинче чăваш хĕрĕ Катерина Федорова та пурччĕ. Шел, Раççей спорт мастерĕ Олимп чемпионĕсемпе танлашаймарĕ.

## Крыминчен кая мар

Чемпионатăн иккĕмĕш кунĕнчи каçхи программăра вара куракансем тӳрех 18 финала пăхма пултарчĕç.

Арçынсем çӳллĕшне сикессинче хĕрӳ ăмăрту каллех Олимп чемпионĕсен хушшинче иртрĕ. Иван Уховпа Даниил Цыплаков 2.28 метр çӳллĕшне парăнтарнă хыççăн тупăшу малалла хĕрчĕ. Иккĕмĕшĕ 2.31-не илсен пĕрремĕшĕ виçене 2.33-е çитерчĕ, анчах хальхинче парăнтараймарĕ. Ку виçене тӳрех 2.35 çине куçарнă Даниила та, ăна сикме палăртнă Ивана та ăнăçмарĕ. Çĕршыв чемпионĕн ятне Цыплаков тивĕçрĕ, Олимп чемпионĕ Иван Ухов иккĕмĕш вырăна юлчĕ.

Чемпионат юнкун вĕçленчĕ. Спортсменсем медальсен 14 комплектне салатрĕç. Шăпах çак кун пирĕннисемшĕн ăнăçлă пулса тăчĕ темелле. Пĕрер ылтăнпа кĕмĕл, икĕ бронза медальпе тулчĕ Чăваш Ен командин пухмачĕ.

Сăнă ывăтмалли секторта Чăваш Ен чысне пĕрремĕш хутчен Вера Ребрик хӳтĕлерĕ. Ялтăра çуралса ӳснĕ 26 çулти пике малтан Украина чысне хӳтĕленĕ. Унти йывăр лару-тăрăва пула пурнăçне улшăнусем кĕртме тивнĕ. Халĕ "пирĕн" шутланаканскер пĕрре ывăтсах сăнна 64.68 метра çитерчĕ. Пиллĕкмĕш хутĕнче кăтартăвне лайăхлатрĕ – 64.93.

– Мана кунта пĕтĕмпех килĕшрĕ. Шупашкарта пиллĕкмĕш кун кăна пулин те паллă вырăнсене çитсе курма ĕлкĕртĕм. Илемлĕ хула. Уйрăмах – кӳлмек хĕрри. Стадион та лайăх. Условисем чаплă, Крыминчен пĕрре те кая мар, – терĕ Шупашкара пĕрремĕш хутчен килнĕ спортсмен республика ертӳлĕхне пулăшнăшăн тав туса.

Çак дисциплинăра бронзăна Марина Максимова тивĕçрĕ. Чăваш спортсменки çĕршыв чемпионатне пĕрремĕш хутчен хутшăнмасть, анчах 2-3-мĕш вырăнсенчен çӳлерех çĕкленеймест-ха.

Кĕмĕл медаль – йĕтре тĕртекен Евгения Смирновăн. Чăваш хĕрĕ ăна 17.38 метра çитернĕ. Шел те, ку кăтарту команда йышне кĕме çитеймест. Апла пулин те Çĕнĕ Шупашкар пики кăмăлсăрланмасть. Кунашкал çитĕнĕве унран никам та, тĕрĕссипе – хăй те, кĕтмен. Чемпион вара – Ирина Тарасова /Мускав, Ростов обл./. Кăçал вăл йĕтрене 18.53 метра та ывăтнă-ха. Ку нормативран 78 сантиметр чухлĕ нумайрах. Хальхинче – 18.01.

1500 метра чупса Раççей тава тивĕçлĕ тренерĕн Валентин Даваловăн вĕренекенĕ Владимир Попов виççĕмĕш тухма хал çитерчĕ. Ку унăн пĕрремĕш бронза медалĕ.

– Паллах, ку пысăк кăтарту мар, анчах эпĕ çĕршыв чемпионатĕнче призерсен йышне лекни те савăнмалли сăлтав, – терĕ вăл финиша çитсен.

## Командăра – 4 чăваш

Хальхи чемпионат Чăваш Еншĕн юлашки çулсенче чи ăнăçли пулса тăчĕ темелле. Пирĕн спортсменсем пурĕ 5 медале тивĕçрĕç. Иккĕшĕ – ылтăн. Команда кăтартăвĕсен пĕтĕмлетĕвĕпе Мускавăн иккĕмĕш команди хыççăн пирĕн республика пысăк лигăра – иккĕмĕш.

Чемпионат вĕçленнĕ хыççăн çăмăл атлетикăн федерацийĕн Президиумĕ Пекинра иртекен тĕнче чемпионатне кайма ирĕк илекенсене палăртрĕ. Пурĕ – 71 спортсмен, тăваттăшĕ – чăваш. Вĕсем: марафон чупакан Алина Прокопьева, шăчăпа сикекен Анжелика Сидорова, сăнă ывăтакан Вера Ребрик тата хăвăрт утакан Александр Яргунькин. Сăмах май, Пекинра 50 километра çуран утас дисциплинăра Александр Раççей командин чысне хӳтĕлекен пĕртенпĕр спортсмен пулать ахăр. Саранскри хăвăрт утакансен центрĕ йĕри-тавра пыракан допинг ыйтăвĕсемшĕн РÇАФ ăсталăхне ку шкулта туптакансене тĕнче шайĕнчи ăмăртусене хутшăнма ирĕк паман.

– Медальсен таса пулмалла. Вĕсен шучĕ мар, пахалăхĕ хаклă, – терĕ ку тĕлĕшпе федерацин тĕп секретарĕ Михаил Бутов.

Аса илтеретпĕр: 2013 çулта Мускавра иртнĕ тĕнче чемпионатĕнче Раççей пĕрлештернĕ команди 17 медале тивĕçсе пĕрремĕш пулса тăнăччĕ. Ун чухне çăмăл атлетсем 7 ылтăн, 4 кĕмĕл тата 6 бронза медале тивĕçнĕччĕ.

Пекинта та ăнăçу сунатпăр вĕсене!

**Татьяна НАУМОВА.**



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



**Кăмпапа чăх яшки**

**0,5 килограмм чăх какайĕ, 100 грамм симĕс сухан, пĕçернĕ 1 çăмарта, вĕтетнĕ хура пăрăç, 1 апат кашăкĕ тип çу, 300 грамм кăмпа, 3 шăл ыхра, 1 чей кашăкĕ тăвар, 1/3 стакан соя соусĕ кирлĕ.**

Какая сивĕ шыва ярса пĕçермелле, шăмминчен уйăрса турамалла. Шӳрпине сăрăхтармалла, тăварпа соя соусĕн çуррине ярса вĕретмелле. Çăмартана турамсене касмалла. Кăмпана турамалла, тип çу ярса хĕртнĕ çатмара ăшаламалла, вĕтетнĕ суханпа ыхра, соусăн юлнă çуррине хушмалла. Кăмпапа какая тирĕк çине хумалла та унтах вĕри шӳрпе ямалла, пăрăç сапмалла, çăмарта турамĕ хумалла.

**Хĕренпе пăшăхланă çăрттан**

**500 грамм çăрттан, хĕрен 1 тымарĕ, çур стакан хăйма, 2 апат кашăкĕ тип çу кирлĕ.**

Пулла çуса тасатмалла, татăксене касмалла, тăвар сапмалла. Хĕрене çуса теркăламалла та тип çупа кăштах ăшаламалла. Çăрттана кастрюле хумалла, хĕрен, хăйма ямалла, хупăпа витсе пĕчĕк çулăм çинче пăшăхламалла.

**Пулă катлечĕ**

**800 грамм шăмăсăр пулă, 3 татăк батон, 3 пуç сухан, 1 çăмарта, 3 кишĕр, 2 хĕрлĕ кăшман, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Пулла сĕтпе ислетнĕ батонпа тата ăшаланă суханпа аш арманĕ витĕр кăлармалла. Тăвар, пăрăç, çăмарта, тип çу ярса пăтратмалла. Хутăшран катлетсем туса сухарипе йăваламалла, тип çупа ăшаламалла, кастрюле хурса темиçе минутлăха духовкăна лартмалла.

**Помидорпа пăшăхланă чăх**

**1 чăх, 6 помидор, 4 пуç сухан, 4 çĕрулми, 2 апат кашăкĕ услам çу, 1 чей кашăкĕ вĕтетнĕ хĕрлĕ пăрăç, 1 чей кашăкĕ "хмели-сунели", 1 чей кашăкĕ шафран, пĕрер апат кашăкĕ вĕтетнĕ кинза, петрушка, базилик, тăвар кирлĕ.**

Çуса татăксене уйăрнă чăхха услам çу ярса пĕчĕк çулăм çине лартмалла. Унтах тăвар сапмалла, сухан тураса ямалла. Çĕрулмие тăварлă шывра пĕçермелле те çаврашкан касмалла. Помидора турамалла та кăштах шыв хушса пăшăхламалла, ала витĕр кăлармалла. Чăх пиçекен савăта çĕрулмипе помидорăн çăра сĕткене хушмалла, тăвар тутине çитермелле, 15 минут пăшăхламалла. Апат пиçес умĕн мĕнпур ешĕл çимĕçпе техĕмлĕхе хушмалла.

**Мăйăр кукăлĕ**

**Сийлĕ чуста, пыл, 1 стакан аçтăрхан мăйăрĕ, 3 апат кашăкĕ сахăр çăнăхĕ, 1 чей кашăкĕ корица кирлĕ.**

Сивĕ чустана 1 сантиметр хулăнăш сармалла та стаканпа çаврашкасем касса кăлармалла. Вĕсем çине сахăр çăнăхĕпе тата корицăпа хутăштарнă вĕтетнĕ аçтăрхан мăйăрне хумалла та ăшĕ тăкăнмалла мар рулет евĕр çаврăрса чĕркемелле. Кукăльсене тип çу сĕрнĕ çатмана вырнаçтармалла, çăмарта сĕрмелле. Апата 240 градуса çити хĕртнĕ духовкăра 15 минут пĕçермелле. Мăйăр кукăльне вилкăпа тирсе 1-2 минутлăха вĕрекен пыла чикмелле, кăларсан сахăр çăнăхĕ сапмалла.

**Тăпăрчă торчĕ**

**1 килограмм тăпăрчă, 1 стакан сахăр, 1 лимон, 0,5 литр хăйма, чĕптĕм ванилин, 1 апат кашăкĕ желатин, мармелад; илемлетме: 1 стакан хĕрлĕ е сарă сĕткен, сахăр, 1/2 чей кашăкĕ желатин, 1 апельсин е улма-çырла кирлĕ.**

Тăпăрчă аш арманĕ е ала витĕр кăлармалла. Теркăланă лимон хуппи, сахăр, ванилин, туранă мармелад ярса пăтратмалла. Желатина малтанах ислемле шыва ямалла. Унтан шыв мунчинче ирĕлтерсе тăпăрчăпа хутăштармалла. Унтах лăканă хăйма ямалла. Торт савăтне сивĕ шывпа йĕпетмелле те унта тăпăрчă сармалла. Апата çур сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла. Унтан ăна улма-çырлапа илемлетмелле. Желатинпа хутăштарнă сĕткен сапмалла. Вăл хытиччен тăхтамалла.

АЧА КĔТЕКЕНЕ

# Кăмăл пăтрансан

Ача кĕтекен хĕрарăмăн кăмăл пăтраннине темиçе тĕрлĕ шĕвекпе ирттерме пулать.

**Мелиссапа лимон.** 1 чей кашăкĕ мелиссана 1 стакан вĕри шыва ярса 20-30 минут лартмалла. Лимон хушмалла. Шыва пылпа пылаклатмалла. Ăна васкамасăр пĕчĕк сыпкăмсемпе ĕçмелле. Лимона лайăх чăмласа çимелле. Кун пек чейпе кунне 2 хутчен 2 эрне сăйланмалла. Анчах та асăрханăр! Мелисса юн пусăмне чакарать.

**Лимонпа пыл шывĕ.** Стаканри вĕри шыва укроппа е петрушкăпа пăтратса сивĕтмелле. 5 минутран 1 апат кашăкĕ пыл ямалла. Унтах темиçе тумлам лимон сĕткенĕ хушмалла. Ăна ирхине выçăлла тата каçхине çывăрма выртиччен ĕçмелле.

**Типĕтнĕ улма-çырла компочĕ.** Каçхине эмаль савăта типĕтнĕ хура слива, курага, панулми тата вĕри шыв ярса хупласа лартмалла. Ирхине сăрăхтармалла. Çак шĕвеке кунĕпе пĕчĕкшерĕн ĕçмелле.

**Курăк чейĕ.** 100 грамм валерьяна, 100 грамм чĕре курăкĕ, 50 грамм кĕтмел çулçи, 100 грамм упа çырлин çулçи, 200 грамм шăлан çырли кирлĕ. 2 апат кашăкĕ хутăша 1 стакан вĕри шыва ямалла. Пыл хушса курăк чейне пĕр уйăх кунне 2 хутчен ĕçмелле. Кăмăл пăтранни иртмесен пĕр эрне тăхтасан курăк чейне каллех ĕçмелле.

**Салтак тӳми.** 2 апат кашăкĕ салтак тӳмине çур литр шыва термоса ярса çĕр каçармалла. Ирхине сăрăхтармалла. Виçĕ пая уйăрса апат умĕн çур сехет маларах ĕçмелле.

**Çăка, пĕтĕнĕк, катăркас чейĕ.** Ача кĕтнĕ чухне кăмăл пăтраннине çăка, пĕтĕнĕк е катăркас чейĕ те лăплантарать. 1 стакан вĕри шыва 1 чей кашăкĕ чухлĕ ямалла вĕсене. Апат умĕн çур сехет маларах кунне 2 хутчен ĕçмелле.

**Мулкач курăкĕн шывĕ.** 2 апат кашăкĕ вĕтетнĕ курăка /чечекĕпе хутăш/ çур литр шыва ямалла. Савăта алшăллипе чĕркесе çур сехет лартмалла, сăрăхтармалла. Шыва апат умĕн 10 минут маларах, апат хыççăн 2 сехетрен 2-шер апат кашăкĕ кунне виçĕ хутчен ĕçмелле. Вунă кунран кăмăл пăтранни иртĕ.

*Сиплеме пуçличчен тухтăрпа канашламалла.*



ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# Кавăн – техĕмлĕ апат

Кавăн – пур выльăхшăн та çав тери паха та техĕмлĕ апат. Уйрăмах – ĕнешĕн. Унра çупа клетчатка сахал, протеин та 1-2 процент кăна, анчах каротин нумай.

Кавăн – сĕт антаракан усăллă пахчаçимĕç те. Анчах ăна кăштах пани те /12-15 килограмм/ сĕте тăкăскă тутă кĕртет.

Майракаллă шултра выльăха ку апата чĕрĕлле пысăк касăксемпе памалла. Кавăна сысна та юратса çиет – ăна ытти апатпа хутăш пама пулать.

Асăннă пахчаçимĕç апат çиес килнине ӳстерет.

# Сĕтри çу виçи

Сĕтри çу виçи чылай чухне выльăх ăратĕнчен килет. Çапах та мĕнпе тăрантарни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ахальтен мар халăхра: "Ĕнен сĕчĕ чĕлхи çинче" тенĕ.

Чи пахи – çаран утти. Акса ӳстерекеннисенчен ĕнесем ытларах люцернăпа клевера кăмăллаççĕ. Анчах та çак культурăсене виçесĕр çитерсен выльăх кӳпĕнме пултарать. Çавăнпа та вăл рационти пур апатăн 30 процентне çеç йышăнмалла.

Ĕнене комбикорм, тулă хывăхĕ, вĕтетнĕ сĕлĕ пани те сĕтри çу виçине ӳстерет. Çавăн пекех рационта тăвар та пулмалла. Çулламалли çук чухне апатра усă кураканнине куллен 70 граммм таран памалла.

ШУТА ИЛМЕ

# Ура тупанĕ çуркалансан

**Ура тупанĕ çуркаланнипе тĕрлĕ ӳсĕмри нумай хĕрарăм асапланать. Арçынсем те ку амака пĕлмеççĕ мар. Тĕрĕссипе, çакă – пăшăрханмалли пысăк сăлтав. Илемсĕррисĕр пуçне утнă чухне хушăран çуркаланчăксем çав тери ыратаççĕ.**

Ура тупанĕ çуркаланнин сăлтавĕ тĕрлĕрен. Пĕрремĕшĕнчен, вăл ӳт типнипе, кушăрханипе, пушмак тĕрĕс мар суйласа вăл урана хырнипе сыхăннă. Çав вăхăтрах çакăншăн организм та айăплă пулаять. Япаласен ылмашăвĕ пăсăлни те, варпа хырăмлăх япăх ĕçлени те, унта – бактерисем, организма витаминпа шыв çитменни те тупан суранланнин сăлтавĕ пулса тăрать. Çав вăхăтрах кăмпа чирĕ те ерме пултарать.

Утнă чухне ура ыратать-и? Эппин, çурăкĕ тарăн. Кун пек чухне малтан сурана сиплемелле. Ура валли календула, салтак тӳми, шалфей ярса ванна хатĕрлемелле. Курăксемпе пĕрле те, уйрăмшар та усă курма юрать. 40 грамм курăка 2 литр шыва ярса пĕчĕк çулăм çинче 5 минут вĕретмелле, 40 градуса çити сивĕтмелле, сăрăхтармалла. Урана шыва çывăрас умĕн 15-20 минутлăха чикмелле. Исленнĕ ӳте пемзăпа хырмалла. Типсен ăна водород перекиçĕпе йĕпетмелле. 5-7 минутран сысна е хур çуне сырлан çăвĕпе /3:1 виçепе/ хутăштарса сĕрмелле. Выльăх çăвĕ çук тăк вазилинпа та усă курма юрать.

Сурансем тӳрленсен ура тупанĕпе лаппине тасатасси çинчен те шухăшлама юрать. Енчен те çуркаланнисĕр пуçне ӳт хулăнланса хытнă тăк, ăна май пур таран ытларах çемçетме пултаракан хатĕрсемпе усă курмалла. Ку тĕллевпе апат соди, 9 процентлă уксуспа хутăштарнă глицерин пулăшать.

Апат содине 40 градуса çити ăшăтнă шывра ирĕлтермелле /2,5 литра 1 апат кашăкĕ/. Урана шыва 20 минутлăха чикмелле. Исленнĕ ӳте пемзăпа хырмалла та урана шывпа чӳхемелле.

Халĕ ура валли компресс хатĕрлеме те юрать. 100 грамм глицерина 2 чей кашăкĕ 9 процентлă уксуспа хутăштармалла. Унпа марльăна е çемçе пусма татăкне йĕпетсе çуркаланнă вырăна çыхмалла. Çиелтен полиэтилен çатăрка, ăшă нуски тăхăнмалла. 25 минутран урана каллех пемзăпа тасатмалла, çуса типĕтмелле.

Ку ĕçе темиçе туса ирттерсенех ӳт çемçелĕ.

Ӳт ытлашши хытман тăк глицерина /1 пай/ олива çăвĕпе /7 пай/ хутăштараççĕ. Малтанхи пекех çыхса нуски тăхăнмалла.

Халăх медицининче ура тупанĕ çуркаланнине ирттермелли мелсем татах та пур. Вĕсене çывăрма выртас умĕн туни чылай витĕмлĕрех.

Ăшă шывра крахмал ирĕлтермелле е çĕрулми пĕçернĕ шывпа усă курмалла. Ура типсен çуллă крем сĕрмелле. Кун пек ваннăна хушăран пĕрре мар, сипленичченех тумалла. Сахалтан та – 7 кун.

Теркăланă панулми те паха. Ăна çыхсан та çиелтен полиэтилен çатăрка тăхăнмалла, çапла çĕр каçмалла. Панулми вырăнне çемçе бананпа та усă курма юрать. Пылпа çыхни те витĕмлĕ.





АХ, АНЧАХ...

# Çемьене салатакан

Эпир общежити пӳлĕмĕнче иккĕн пурăнатпăр. Кĕтерукпа питĕ туслă теме çук. Унăн – хăйĕн йăпанăçĕ. Вăл пушă вăхăта каччăсемпе ирттерме юратать. Ăса вĕрентекен ашшĕ-амăшĕ юнашар пулсанах хăйне çав териех ирĕклĕ тытаймĕччĕ вăл. Анчах вĕсем ялтан хулана тăтăш килсе çӳреймеççĕ.

Университетран тухсан юлташсемпе уçăлса çӳрес килмерĕ манăн. Хырăм выççи общежитие хăваларĕ. Кунĕпех ăша çăкăр тĕпренчĕкĕ те яман. Ирхине лекцирен юласран шикленсе апатланаймарăм. Васкаса тухнăран укçа чикме маннă та тăхтавра столовăя каяймарăм. Пĕрле вĕренекенсем кивçен укçа парасшăнччĕ те – илмерĕм.

Пӳлĕм алăкне йăпăр-япăр уçса ятăм. Кĕтерук пĕр каччăпа вырăн çинче выртать. Çарамасланнăскерсем утиялпа витĕнме те ĕлкĕреймерĕç. Намăсланма та пĕлмеççĕ вĕт. Çитĕнсе çитнĕ, хамăрпа хамăр хуça, мĕнле пурăнмаллине хамăр пĕлетпĕр теççĕ ĕнтĕ. Унашкаллине малтан та курнăран пӳлĕмрен тӳрех тухмарăм. Кур-ха, ытла иртĕннĕ: пĕрисем – вĕренеççĕ, теприсем – вырăн çинчен те тăмаççĕ. Каччă ытамĕнче лайăх пуль çав.

Чейникре шыв та çук. Ахăртнех, вĕретме вăхăт пулман. Савăт-сапа çуман. Апат çисе янă... Кастрюль хуппине юриех хыттăн хупрăм та саппун ярса тытрăм.

Кухньăна тухса кĕнĕ вăхăтра палламан каччă тумланнă, Кĕтерук душа вĕçтернĕ. "Ытла хăвăрт çитрĕн эс паян", – тет çăвăнса тасалнă хĕр. Эпĕ чĕнместĕп. Хирĕçес килмест унпа. Пĕлсех тăратăп – кĕç-вĕç вырăн çинчи хутшăнусем çинчен калаçма пуçлать вăл. "Ку та килентереймерĕ", – ним вăтанмасăр палăртать Кĕтерук. Манăн калаçăва сыпăнтарма сăмах çук.

Кĕтерукăн çуралнă кунне паллă тумашкăн тăванĕсем килсе çитрĕç. Амăшĕ мана хĕрĕпе пĕрле яла пыма чĕнсе хăварчĕ. Канмалли кунсенче иксĕмĕр çула тухрăмăр. Хăтлă çуртра пурăнать тантăшăм. Мĕн кирли – йăлтах пур. Кил хуçи арăмĕ ăшă кукăльпе кĕтсе илчĕ пире.

Каçхине çамрăксемпе пĕрле клуба васкарăмăр. Кĕтерук ман çинчен мансах çӳллĕ пĕр яшпа сцена варринче çаврăнать. Кăштахран иккĕшĕ таçта çухалчĕç. Манпа та каччăсем калаçасшăн, клуб хыçĕнчи стадиона чĕнеççĕ. Унта эрехĕ те пур, курăкĕ те çемçе имĕш. Ку ялта мана та вылянчăк шухăшлă хĕрсен йышне кĕртрĕç ахăр. Мĕнле хăтăлмалла хайхисенчен? Ют çĕрте мана никам та хӳтĕлес çук. Клубран тухма та шикленетĕп. Тем шухăш тытĕç çамрăксем?

Тахăш самантра Кĕтерук çитсе кĕчĕ. Савăнăçлă хăй. Мана киле илсе каясшăн. "Мунчана хупăнса лартăмăр. Хĕр-хĕрарăма юратма пĕлет çав Петĕр. Ирчченех унпа пĕрле пуласшăнччĕ те... Сан пата тухса килтĕм", – кăмăлĕ лайăх Кĕтерукăн. Унăн ăссăрла хăтланăвĕсенчен тĕлĕнме те пăрахрăм ĕнтĕ. Унпа пĕрле çӳренĕшĕн хама çеç пĕр вĕçĕм ӳпкелетĕп.

Пĕрре çывăрма выртас умĕн тантăшăм хăйĕн блокнотне уçкаласа кăтартрĕ. Унта хăш каччăпа ăçта тата хăçан выртса тăнине çырнă. Мĕн тума пĕлтермелле çакна? Мана ку кăсăклантармасть.

Кĕтерукăн каччисем йăлăхтарса çитерчĕç, çавăнпах урăх пӳлĕме куçрăм. Пĕлĕшĕмсем те ман пекех культурăри, вĕренӳри çĕнĕлĕхсемпе кăсăкланаççĕ, çĕнĕ спектакльсене сиктермеççĕ, библиотекăран тухма пĕлмеççĕ.

Лекцисене çӳременшĕн Кĕтерука аслă шкултан кăларса ячĕç. Йĕркеллĕ ĕç тупаймарĕ, ача çуратаймарĕ тантăшăм. Хăй çаплипех арçынсене астарать, тĕнче касса çӳрет. "Çемьене салатакан", – теççĕ ун пирки сынсем.

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

ЭХ, ÇАМРĂКЛĂХ

# Курмаççĕ терĕç пуль...

Пирĕн, студентсен, пушă вăхăт тем чухлех. Хăш чухне общежитирен те тухас килмест. Çавăнпах эпир балкон çине пуçтарăнса тăратпăр та çӳлтен аялалла тинкеретпĕр. Йĕри-таврари ĕç-пуç алă тупанĕ çинчи пекех курăнать.

Акă пĕр курсра вĕренекен Лариса таçтан вĕçтерсе килет. Аллинче – чечек çыххи. Кам парнеленĕ-ши ăна? Ах, пĕлесчĕ! Кăштахранах общежитирен тухса кайрĕ вăл. Лавкка çывăхĕнчи тĕм айĕнче пĕр арçын кĕтсе тăрать иккен ăна. Никам та курмасть-пĕлмест терĕç пуль. Пирĕнтен пытанаймăр. Иккĕшĕ çавăтăнсах утрĕç, часах курăнми пулчĕç. Пĕрремĕш курс пĕтеричченех ача çуратрĕ Лариса. Авланнă арçынпа тĕл пулнă-мĕн вăл. Студент тĕпренчĕкне амăшĕ патне яла леçрĕ. Пепке ашшĕне общежити çывăхĕнче урăх курман.

Тĕттĕм кантăклă çăмăл машина килсе чарăнчĕ. Шукăль тумланнă арçын салонран тухмасть. Хăйне кăтартма кирлех-и ăна? Аслă курсри пĕр чиперкке чупса пырсах ун çумне кĕрсе ларать. Иккĕшĕ ыталашса чуп тусанах машина тапранса каять. Çак ӳкерчĕке тăтăш курнă. Кĕпине куллен тенĕ пек улăштаракан хĕре ăмсаннă та. Темиçе уйăхран хайхи çав машина çухалчĕ. Пирĕн общежити студенчĕ салхуланчĕ.

Пирĕн курсри хĕрсем патне те каччăсем килчĕç. Вĕсем йышпа Атăл кӳлмекĕнче уçăлса çӳреççĕ, ташă каçĕнче савăнаççĕ, кафене каяççĕ. Пӳлĕме таврăнсан пуçлаççĕ вара каласа кăтартма...

Иртнĕ эрнере юнашар пӳлĕмре пурăннă Ивановсем куç тĕлне пулчĕç. Упăшки икĕ сумка йăтнă, арăмĕ хыççăн йăл-ял çиçсе утать. Кĕвĕç чунлă хĕрарăм çинчен сăмах хускатмаллах-ши? Юрĕ ĕнтĕ, каласа кăтартам. Пит-куç çума коридора тухсан упăшкипе калаçнине асăрханă та тӳрех общежити пуçлăхĕ патне чупнă вăл. Эпир унăн упăшкине илĕртетпĕр, вĕсене йĕркеллĕ пурăнма чăрмантаратпăр имĕш. Çавăнпах пире урăх çĕре куçарчĕç. Пурпĕрех кӳренместпĕр, пире унта та лайăх. Унăн мăшăрне туртса илесси шухăшра та пулман. Авланнă арçынсăр пуçне каччăсем çук-и? Яшсемпе хутшăнмалла, телей шырамалла пирĕн. Вĕсем общежити патĕнчех ушкăн-ушкăн тăраççĕ: пĕрисем – паллашасшăн, теприсем савнийĕсене кĕтеççĕ. Çав самантрах эпир кашнине хак паратпăр. Усал сăмахсемпе перкелешеккеннисем, ашкăнаканнисем, пирус туртаканнисем, сăра ĕçекеннисем никама та килĕшмеççĕ. Вĕсенчен кирек камăн та пăрăнса иртес килĕ. Ăшшăн калаçаканнисемпе, хăйсене йĕркеллĕ тытаканнисемпе, тĕслĕхрен, сăмах хушма юрать.

Курăр-ха, курăр, манăн савни салтакран таврăннă. Маларах пĕлтермен те... Вокзала кайсах кĕтсе илĕттĕм. Хирĕç тухас-и? Măйĕнчен уртăнас-и? Тусăмăрсем, манпа пĕрле хĕпĕртĕр! Текех балкон çине тухса тăмăп ĕнтĕ. Общежитири лару-тăрăва ыттисем сăнаса тăччăр. Манăн савнипе юнашар пулмалла. Юрататпăр эпир пĕр-пĕрне!

**Лира ЛЕВОЧКИНА.**



ЧУНРИ

# Хăмăшлăхра

Мĕн ачаран утă çулса ӳснĕ эпир. Çава тыттарма хăраман атте-анне. Пĕр касри темиçе кил пуçтарăнса каяканччĕ вăрмана. Тĕттĕмленмесĕр таврăнма та шухăшламан. Вăрманта кăвайт чĕртсе апатне хуранпа пĕçерсе çинĕ. Лайăх çанталăк пулсан утта пĕр эрнере тирпейлесе кĕртекенччĕ. Кӳршĕ Алешăпа ăмăртса çулни те пулнă. Паллах, паккус вĕçне вăл çавах манран маларах тухатчĕ. Кайран ашшĕнчен çава туптама та вĕренчĕ. Кăнтăр вăхăтĕнче пурте каннă чухне пĕчченех шаккаса ларатчĕ.

Вунпĕрмĕш класа куçнă çулхине пĕр кунне Алешăпа иксĕмĕр çеç çултăмăр утă. Каç енне хытах ывăнса çитнĕччĕ. Киле виçĕ çухрăм çуран утмаллине кура кӳлĕре шыва кĕрсе уçăлтăмăр. Каччăран вăтаннипе çӳхе кĕпепех шыва сикрĕм. "Тăхта-ха, кун пек тата хăçан ларăпăр-ха, çу часах иртсе каять. Тепĕр çул эсĕ аякка вĕренме тухса кайăн, мана вара çар кĕтет", – терĕ вăл. Шыв хĕрринче тĕттĕмленичченех калаçса лартăмăр. Каçĕ тĕлĕнмелле хитреччĕ. Хăмăшлăхра пĕр чарăнми куккук авăтатчĕ. Киле кайма тухсан манăн çавана хăйĕн хулпуççийĕ çине хучĕ те сăртран аннă май алăран çавăтрĕ. Кĕлеткене ток çапрĕ-им, алла хам сисмесĕрех карт! туртрăм. "Эсĕ шуса каясран çеç", – терĕ хăй те хĕрелсе. Яла нимĕн чĕнмесĕрех çитрĕмĕр. Хамăр урама кĕрсен çеç пĕр-пĕрне ырă каç сунса сывпуллашрăмăр. Тепĕр ирхине вăл манран маларах çитсе çулма та тытăннăччĕ. Кăнтăр вăхăтĕнче утă çулакансене кăвак матрӳшке чейĕ вĕретсе ĕçтерчĕ. Каçхине ватти-вĕтти таранах вăрман хĕрринчи шывра чăмпăлтатрăмăр. Тутлă шӳрпе çирĕмĕр. "Эсĕ туятăн-и, пирĕн хушăра темĕн пур", – терĕ вăл çав каç. Вăтантăм, куçа хăвăртрах айккинелле тартрăм.

Çулталăк хăвăрт иртсе кайрĕ. Эпĕ вĕренме çул тытрăм. Кĕркунне ăна çара ăсатма та çитеймерĕм. Çырăвĕсем чăннипех те çунат хушатчĕç. Хĕрсенчен вăтаннăран кĕнеке хушшине хурса вăрттăн вуласа тухаттăм. Каччă пуррине те пĕлтерес килместчĕ çав. Анчах... Мĕншĕн пур-ши çав сăмах? Иккĕмĕш курсра мана урăххи куç хыврĕ. Хамăрпа пĕрле вĕренекенни. "Манăн каччă пур, савнине кĕтетĕп", – тесе калама пултарайман-и-ха эпĕ? Туслăх хуллен юратăва куçрĕ. Сашăсăр пуçне урăх никама та курмастăмччĕ. Тăваттăмĕш курс пĕтерсен туй кĕрлеттертĕмĕр. Пирĕнтен телейлĕ мăшăр та çукчĕ. Пулать вĕт çапла, пĕр-пĕрин валлиех çуралнă темелле-ши? Анчах та çак телей нумая пымарĕ çав. Яла мансăрах кайрĕ те тепĕр кунне ман пата шăнкăравласа хăрушă хыпар пĕлтерчĕç. Çул çинче автобуспа çапăннă... Больницăна илсе çитериччен чĕри тапма чарăннă. Çывăх çынпа ĕмĕрлĕхе сывпуллашма питĕ йывăр. Юрать, çав вăхăтра аттепе анне çумра пулчĕç. Хуняма та хуйхăпа хуралсах ларчĕ. Кашни эрнерех ун патне яла çӳрерĕм. "Пĕччен ан пурăн, хĕрĕм, эсĕ çамрăк-ха, санăн пурнăç малалла", – терĕ хуняма.

Çук, никампа та калаçас темерĕм. Унтанпа вунă çул та иртсе кайрĕ. Эпĕ вара халĕ те пĕчченех.

Кăçал утă уйăхĕнче тăршшĕпех ялта пултăм. "Сана Алеша питĕ курасшăн, калаçатăн-и, вăл та сан пекех тăлăх", – терĕ пĕррехинче анне. Вунă çул хушшинче ытлах улшăнман вăл. Урăххипе явăçса кайнă мăшăрĕ ют çĕршыва тухса вĕçтернĕ. Пилĕк çулти хĕрне шеллемесĕрех ялта пăрахса хăварнă.

Тĕттĕмленсен çеç кĕтĕмĕр урамран. Айăпласа мана пĕр сăмах та каламарĕ ача чухнехи тусăм. Тепĕр кунне ирех çава йăтса килчĕ те утă çулма илсе кайрĕ. Çав вырăнах. Нимех те улшăнман, йывăççисем çеç ӳссе кайнă. Хĕвел вăрман хыçне пытаниччченех çултăмăр. Хăмăшлăхра çамрăклăха аса илтерсе пĕр чарăнми куккук авăтрĕ. Шăп вунă çул каяллахи пекех.

**Елюк ШЕРЕПИ.**




Владимир КУЗЬМИН

# Вилĕм çави айĕнче

*Калав*

Хурăнлă Хĕвелкас вăрман варринче çуралса аталаннă. Яштака, тăпăлкка, вăрăм çивĕтлĕ йывăççен ытамĕнче. Вĕсен хушшинче тăп-тăп, хăватлă юмансем кашланă. Пĕрле вĕсем, хăйсен сĕткенĕпе, çимĕçĕпе тавралăха ешерттернĕ, çĕр сĕткенĕпе, сывлăшĕпе чăваша Хĕвел çине чăр-чар куçĕпе пăхтарнă. Ай, юратать-çке чăваш куç айĕн те, куçа пăрса та, куçа чарса та пăхма хĕвеле хирĕç. Хĕвелĕ çеç вара пурин çине те пĕрешкел пăхать: çапçутă çутатса, ăшăтса-ачашласа. Хурăнлă Хĕвелкасри Хĕвелписем те ăна ирпе кĕтсе илеççĕ те каçпа ăсатса яраççĕ. Çав вăхăтра вара вĕсен хушшинче мĕн кăна пулса иртместши? Ăна эпир кăна мар, тепĕр чухне хăйсем те тӳрех ăнланса-туйса пĕтеймеççĕ пулас.

Çичĕ юплĕ çырма пуçне сарăлса ларнă Хурăнлă Хĕвелкас хăйĕн халăхне ачи-пăчине пăхса ӳстернĕ пек савать, ăс парать, ятлать, ытамласа пĕрлештерет.

Хĕвелпийĕсем, çĕр упăтисем майлах, çĕр тĕрлĕ вĕçме те, сикме те, култарма та пултараççĕ. Упăте сăнĕ кăна мар, çĕр çинчи ытти тискер кайăк сăнĕ те тупма пулать вĕсен сăнпитĕнче, хăтланăвĕнче. Мĕн калăн ĕнтĕ – пурте эпир çĕр çинче çуралса, аталанса ӳснĕ-çке. Пурте эпир – çĕр хурчĕсем. Хурăнлăхсем те – çав-çавах.

Авă Карас пĕви хĕрринчи Хĕвел Хĕветĕрĕсен авалхи кил-çурчĕ ĕмĕрсен хушшинчи чĕтренӳсенче те арканман. Патшалăх хăйсене тивĕçтернĕ çĕрпе тулăхлă усă курса, перекетлĕн майлашăнса пурăннă. Вăй-хăватлă çемье нихçан та тарçа кĕрĕшмен, хăйĕн ăсĕпуçĕпе, çаврăнăçулăхĕпе, хресчен челĕхĕпе кил сĕтелне чухăн лартман, ял-йышра, тавралăхра ят-сумлă пулнă, нушаланакана йывăрлăхра алă тăсса панă. Тăхăрвунналла тапаçланакан Хĕвел Хĕветĕрĕ те ял тытăмĕнче чĕнтĕрлĕ кĕпер никĕсне тĕреклетсе тăракан юман юпасенчен пĕри пулнă. Хăйсен ял хĕрĕпех, Хĕвелпипе, пĕрлешнĕ хыççăн вĕсем тĕнчене ывăлхĕр парнеленĕ.

Çеремлĕ çырма хĕрринчи вырăсла хапха хыçне пытаннă кил хушши çурма тĕттĕмре. Сулахай енче – сад пахчи. Ракатка карта. Унта пĕчĕк алăк. Сылтăмра – пӳрт хĕрри. Пӳрт çумĕнче хăма хапха. Акă хапха алăкĕ чĕриклетсе яриех уçăлса каять те, шав çĕклесе, ташă ташласа, кил хушшине хĕрарăм ушкăнĕ кĕрет. Пурте шупăрпа, пуçĕсенче – пуç кăшăлĕ, аллисенче – хулăран çыхнă шăпăр. Ушкăн варринче – шалпар, вăрăм хура халат тăхăннă, хулпуççи çине çава çакнă, кĕреçе сухаллă арçын. Вăл çĕкленӳллĕн юрлать:

Эп кĕреке турри – Пахус,
Çăра та хулăн ман паккус.

Хайхискер çавине хулпуççи çинчен илсе лапаткалать те çулма хатĕрленет. Хăранипе хĕрарăмсем чăл-пар саланаççĕ. Пахус ик еннелле те пăхса илнĕ май малалла янраттарать:

Сулса ярап та çавана –
Тăрантаратăп çăвана.

Хĕрарăмсем каллех ушкăна пухăнаççĕ те карталанса ташлаççĕ. Пĕчĕк алăкран тайкаланса кĕрекен Хĕвел Хĕветĕрĕн кинне Хĕвелюна вĕсем хулран çаклатса пĕрле çавăрма тытăнаççĕ. Пахус пĕр вырăнта тапăртатса савăнать:

Эй, халăх, хура халăх!
Пушанчĕ-им урхалăх,
Тăратрăн-им лавна?
Кӳр, пар, апла, ална.

Хĕвелюн тăрук ташлама чарăнать, ушкăнран туртăнса уйрăлать те Пахус еннелле талпăнса пырать. "Пахум! Пахум? Эс килтĕн-и? Килтех-и эс?" – тесе Пахуса ыталаса ӳлесе ярать: "Эй, Турă çырлахах. Туррăмçăм, тавăрса патăн пать-ха эсĕ мана хамăн упăшкама. Ахальтен мар кĕлĕ турăм пуль. Сана пуççапни харама каймарĕ. Çаран çулма вăхăтрах çитрĕн".

Пахус шавлакан хĕрарăмсене чарăнма хушать те ӳсĕр Хĕвелюнпа хăпартлансах калаçать:

– Çаран çулма çав, уттах килтĕм, инке. Ара, кашласах ӳсет-ха та кĕреке çаранĕ. Куç умĕнчех ӳкет, типет, ĕнет. Хăй вăхăчĕпех çулса пăрахмалла-çке.

Хĕвелюн ăна вăрăм сухалĕнчен çавăрса тытса ыталасшăн, тăнĕ кĕрсех çитейменнине пула, хальччен курманскерне упăшкипе пăтраштарать:

– Виç талăк иртрĕ вĕт сана курманни, Пахум.

– Эккей, тем аташать, – сулахай аллипе Пахус хĕрарăма çумарах туртать.

Хĕвелюн Пахус çине куçне хура аллипе сăтăрса пăхать:

– Эй, намăс сана, Пахум. Сухална та хырман. Виç талăкрах авалхи курпун сысна пек шăртланса кайнă. Ватăлнă. Тахçанхи хытнă аçама тăхăннă. Ăçтан тупнă эс ăна? Эй, Турă! Пахум мар пуль эс?

– Эп, инке, чăнах та сан Пахуму мар, Пахус.

– Паккус? Ха-ха-ха! Суйпик. Ара, Паккус пулсан, мĕнле-ха Пахум мар эс. Паккус Пахумех эс. Çавах. Ман упăшках.

– Çук çав. Вăл мар.

– Сысна кăнтăрли мар-и?

– Минренĕ эс, инке. Ĕçсе-супса пуçна çухатнă. Кĕçех ман çава айне пулан ак. Тăнла, Паккус Пахумĕ мар çав эп, Пахус. Авалхи кĕрексен савăк турри. Эрех хутне кĕрекен. Тулăх турри, кĕреке турри, эппин. Эп ăçта çитнĕ – унта ĕçкĕ-çикĕ, савăнăç. Эй, çăлкуç пек таптăр сирĕн килте те сăри-эрехĕ! – Пахус кулкаласа çаврăнса илет.

Тăнласах çитеймен Хĕвелюн ун çине пуçне чалăштарса пăхать:

– Те ĕненмелле сана, те ĕненес çук. Каплах чике тăршшĕ лартас тетĕн пулсан, паллах, этем мар эс. Шуйттан măйраки пуль?..

Пахусĕ ăна ĕнентересшĕнех:

– Турă пулсан та этемех эпĕ, инке. çĕр çине аннă савăнăç. Турă та этем ăшĕнче пурăнать, этем те турăрах ларать. Пĕрлех эпир. Пĕр вартах. Пĕр сывлăшрах, – тет.

Хĕрарăмсем пĕр вырăнта тăпăртатса ташласа, çурма сасăпа такмаклаççĕ, унтан алла-аллăн тытăнса Пахуспа Хĕвелюна вăйă картине хупаççĕ. Хĕвелюн вĕçерĕнсе сăх-сăхса илет:

– Эй, Турă, епле савăк сирĕнпе чăнах та.

Пахус çавине хулпуççи çине хурса хулăн сассипе хĕрарăмсен шавне хуплать:

Епле ман ушкăн савăк,
Пĕрле ташлар пĕр авăк.
Ĕçер-çиер çур талăк,
Выртса канар çулталăк.

– Ĕненмелле те, çав вăхăтрах ĕненмелле те мар, – урине тăрст! тапать ташлама чарăннă Хĕвелюн. – Çук, ĕненмесп!

– Мĕншĕн? – кăсăкланать Пахус.

– Мĕншĕн тесен, ман Пахум çылăхлă. Çылăхлă этем ăçтан-ха турă пултăр.

– Акă ĕненмесен хĕрарăмсенчен ыйт. Эп камне çирĕплетсе парăр-ха, чун уççисем?

– Пулăх турри, – тет чăнласах пĕри.

– Пирĕн ырлăх-савăк турри Пахус вĕт вăл, Хĕвелюн, – тет тепри.

Хĕвелюн вĕсене итлесшĕн те мар, аллисемпе сулкалашса пакăлтатать:

– Ан епрĕр. Пурте якăлти-кĕрт эсир. Эсĕ те, Пахус-Паккус текенскер, турă мар. Эс те аскăнчăк. Эй, ваçка, чиперех суяççĕ. Ара, туррăн ун çапла пулмалла-и? Хĕрарăм купипе ассапĕссе çӳремелле-и? Ан суй, нимле кĕреке турри те мар эс – ман Паккус Пахумĕ. Никаккуй турă мар – ман упăшка.

– Каллех ку инке хăйĕн юрринех юрлать, – тарăхса пуçне пăркаласа илет Пахус.

Турă умĕнче тăракан Хĕвелюн кут хыçĕнче вут чĕртнĕ пек хĕрсех пырать:

– Тĕрĕссине калап. Ан чар эс мана, Пахум. Ха, епле сикет еркĕнӳ хăв тавра? Суйка Суйкки темерĕн. Çӳçнепуçне мĕнле арпаштарса янă? Намăссăр. Сан Суйкку та, эсĕ те, пурте суятăр. Эх, суя пурнăç...

Суйка Суйкки текенни, Пахум арăмне ытларах çĕтĕлтересшĕн Пахус тавра ташласа çаврăнать те турра ыталаса чуптăвать. Урнă пек хаярланса кайнă Хĕвелюн Суйккана çӳçрен ярса илет. Лешĕ ăна аллинчи шăпăрĕпе çапа-çапа çухăрать:

– Ухмах эс! Ухмаха тухнă Хĕвелюн.

Хĕвелюн упăшкин еркĕнне çĕре туртса антарать:

– Парап эп сана ухмах. Хăçан чарăнан ман упăшкапа асма? Хăçанччен йĕмелле сирĕншĕн, э? Кала? Атту таптаса çăрап. Вĕлереп, сана та, Пахума та.

Аран-аран вĕçерĕнсе иксе тăнă Суйка Суйкки турă çурăмĕ хыçне пытанать. Пахус çавипе хăмсарса кăшкăрать:

– Чарăнатăр-и е чарăнмастăр эсир?!

Мĕнле вăй чарма пултартăр ĕнтĕ аçашăн çапăçакан амасене, пĕри тепринчен витĕмлĕрех тивертет вĕçерĕнсе кайнă чĕлхипе. Суйка Суйкки хĕрсех виртлет:

**/Малалли пулать/.**

*САВĂ СĔВЕМĔ*

Вячеслав МИХАЙЛОВ

# Телей шаккĕ алăкран

Пултарулăх та сăпайлăх,
Чунлăх, чыслăх çынсенче.
Пурăнать-çке хăйне майлă
Кашниех çак çĕр çинче.

Шăпаран вара иртеймĕн.
Тур парать, шуйттан чарать...
Çавăнпа нихçан пĕлеймĕн
Мĕн кĕтет те мĕн пулать.

Пурнаймасть çын йăнăшмасăр,
Кирлех мар пуль тĕлĕнме.
Такăнсассăн наймасăр
Тăрăшмасăр çĕкленме.

Пурнăçра ан улталанăр,
Ан улталăр хăвăра.
Йăпăлтисене ан шанăр,
Шанни çук вăл йăвара.

Пуяна та ан ăмсанăр,
Паян пур ун, ыран çук.
Усалпа та ан çыхланăр,
Ыррине вăл сунас çук.

"Тетсене" те ан ĕненĕр,
"Тет" тени – ялан суя.
Йӳççипе те ан киленĕр,
Тыттарать ирех туя.

Çын çӳппи пӳртре ан пултăр,
Кирлĕ мар вараланма.
Çăмăлтайлăх хыçра юлтăр,
Ан пикенĕр мухтанма.

Çынсем хыççăн ан сиксемĕр,
Янтти час пыра ларать.
Тар тăкса çеç ĕçлемесĕр –
Çукран мул вара пулать.

Ваттисем асăрхаттарнă:
Иличчен кивçен хăв пар.
Парăм вăл нушалантарнă
Ăслине те сахал мар.

Турăпа пĕрле пулсассăн,
Çул кăтартĕ аякран.
Хăвăрпа хуçалансассăн
Телей шаккĕ алăкран.

* * *

Асамлă вăй ачалăха
Парнелесен вăхăтлăха
Ларасчĕ ман анне çумне,
Итлесчĕ ун ăш сăмахне.

Курасчĕ ман юлташсене,
Вылясчĕ чун каниччченех.
Юмах ярасчĕ киленме,
Шкула каясчĕ вĕренме.

Эх, ярăнасчĕ йĕлтĕрпе,
Çунашкапа е конькипе.
Юр ирĕлсе çерем тухсан
Чупасчĕ тантăшпа çарран.

Асамлă вăй çамрăклăха
Парне тусан вăхăтлăха
Аннен ăшран тухан пилне
Итлесчĕ ман çине-çине.

Пуласчĕ хам тантăшсемпе,
Сăмах вакласчĕ вĕсемпе.
Юрлас-ташласчĕ çĕрĕпе
Нихçан манми яш-кĕрĕмпе.

Çуласчĕ утă улăхра,
Пĕрле ларасчĕ улахра.
Лаша пăхасчĕ выртмара,
Татах ĕçлесчĕ заводра.

Ачалăхпа çамрăклăха
Çухатрăм пуль яланлăхах.
Аса илсе çеç йăпанам,
Чун-чĕрене хăват хушам.

* * *

Чăваш Ен сар хĕрĕсем...
Илĕртӳллĕ куçĕсем,
Çырла тейĕн тутисем.
Юрă-ташă ăстисем,
Ĕçпеле пиçĕхнисем.
Кам ăмсанмĕ-ши сире,
Кам юратмĕ-ши сире?

*Хушса юрламалли:*
Чăваш Ен пикисем
Чăннипех чипер,
Чăннипех маттур.
Мухтанмалăх пур,
Ăмсанмалăх пур.

Чăваш Ен яш каччисем
Улăп евĕр йĕкĕтсем.
Юмахри пек паттăрсем.
Яштака кĕлеткисем,
Ĕçре ылтăн аллисем.
Кам ăмсанмĕ-ши сире,
Кам юратмĕ-ши сире?

*Хушса юрламалли:*
Чăваш Ен яшĕсем
Чăннипех хитре,
Чăннипех сатур.
Мухтанмалăх пур,
Ăмсанмалăх пур.

Чăваш Ен хĕрĕсем,
Чăваш Ен каччисем
Чипер те маттур,
Хитре те сатур.
Мухтанмалăх пур,
Ăмсанмалăх пур.

ҪӖРШЫВРИ ЧИ ХӐВАТЛӐ ХӖРАРӐМСЕМ

# Харсӑр чиперуксем

**Наина Ельцина – Раҫҫей пӗрремӗш президенчӗн тӑлӑх арӑмӗ**

**Николай Сванидзе, журналист:**

– Маншӑн Наина Иосифовна – Раҫҫейри пӗрремӗш леди. Яланлӑхах. Унран лайӑххаххине, маттуртараххине, пултаруллӑраххине курмастӑп. Вӑл лайӑх воспитани илнӗ, хӑйне тыткалама пӗлет, ҫын умӗнче вӑл нихӑҫан та Борис Николаевич умӗнче каҫӑрӑлса тӑман.

Яланах мӑшӑрӗ хыҫӗнчеччӗ вӑл – унӑн мӗлки пек. Ҫав вӑхӑтрах Наина Иосифовна нихӑҫан та сӑрӑ шӑши пулман. Хӗрарӑм упӑшкипе яланах пӗр шухӑшлӑ пулни паллӑ. Борис Николаевичшӑн ҫирӗп тылччӗ вӑл. Питӗ лӑпкӑ, питӗ ӑслӑ.

Унӑн сӑнарӗ – амӑшӗн сӑнарӗ. Пӗрремӗш леди темӗн тӗрлӗ сӑнлӑ та пулма пултарать вӗт, калӑпӑр, ҫӗршыври пӗрремӗш чиперкке. Наина Иосифовна вара амӑшӗччӗ – пӗтӗм ҫӗршывшӑн. Манӑн шухӑшпа, вӑл ҫакӑн пекех юлать. Ҫав вӑхӑтрах питӗ илӗртӳллӗ те вӑл.

Астӑватӑп, пӗррехинче Борис Николаевич ҫинчен фильм ӳкеретпӗр. Вӑл ӗҫ юлашки пуласса ун чух никам та шухӑшлама та пултарайман-ха. Ельцинӑн 75 ҫулхи юбилейӗ тӗлне хатӗрленӗччӗ ӑна. Мана вӑл пӗр черкке эрех ярса пачӗ. Ҫак вӑхӑтра Татьяна Борисовна пирӗн пата пычӗ. "Аттеҫӗм, эсӗ мӗнле сывӑртӑн?" – тесе ыйтрӗ. Борис Николаевич куҫ харшине пӗркелерӗ те: "Часах сывӑрса каяймарӑм ҫав, аннӳпе нумайччен юрату ҫинчен каласса выртрӑмӑр та", – терӗ. Ҫакӑ манӑн асӑмра ҫырӑнса юлчӗ.

*Биографи*

Наина Иосифовна 1932 ҫулхине Эрӗнпур облаҫӗнчи Титовка ялӗнче ҫуралнӑ. Ашшӗ – Иосиф Гирин. Амӑшӗ – Мария Гирина. Наина Урал политехника институтӗнче инженер-строитель специальноҫне алла илнӗ.

Ачалӑхӗпе хӑвӑртах сывпуллашма тивнӗ. Ҫемьере ултӑ ача ӳснӗ. Нина кӗҫӗннисемшӗн иккӗмӗш амӑшне ҫаврӑннӑ. Шӑпах ҫавӑн чухне, шӑллӗйӑмӑкне пӑхнӑ чухне, тухтӑр пулас ӗмӗт ҫуралать унӑн. Шӑллӗ ӑнсӑртран ӳтне кастарса ярать – Нина сурана ҫыхса яма та пӗлет...

Акӑ хӗр Свердловска документсемпе васкать – медицина институтне. Ӑна хирӗҫ шӑпах юлташӗсем, вырӑнти политех студенчӗсем, килеҫҫӗ. Паллах, институт пирки сӑмах хускалать. Студентсем хӗр пуҫне туххӑмрах ҫавӑрса яраҫҫӗ. Наина врач профессийӗ пирки манса строительство факультетне ӑсатать документсене.

Борис Ельцин та унтах вӗреннӗ. Наинӑна ӗненес тӗк, пур студентка та тенӗ пек уншӑн пуҫ ҫухатнӑ. Анчах та каччӑ чунӗ пӗр хӗршӗн кӑна ҫуннӑ. Наина ҫемйи малтанах хӗре ку йӗкӗтпе пӗрлештересшӗн пулман-ха. Анчах та юратакан чӗресене чарма пулать-и вара? Наина та тӑванӗсене итлемен. Ҫапла вара 1956 ҫулхине Анастасийӑпа Борис мӑшӑрланнӑ.



Ҫапла-ҫапла, Анастасия – хӗр ҫут тӗнчене ҫак ятпа килнӗ. Анчах та никам та – юлташӗсем те, ӗҫтешӗсем те, ашшӗ-амӑшӗ те – ӑна ҫапла чӗнмен. Пурте Ная тенӗ, Наина. Чӑн ятне хӗр хӑй те манса кайнӑпа пӗрех. Официаллӑ майпах Наина пулса тӑма ӑна тантӑшӗсем ӳкӗте кӗртнӗ. Чӑн та, Ельцина малтанах килӗшсе кайман ку шухӑш. Хӗрарӑм каласа кӑтартнӑ тӑрӑх, Борис мӑшӑрне ҫулталӑк тӑршшӗпех "хӗр" тесе чӗннӗ. Туй хыҫҫӑн Наина проект институтне инженера ӗҫлеме вырнаҫнӑ.

25 ҫул ытла, мӗн тивӗҫлӗ канӑва тухиччен, хӗрарӑм Свердловск облаҫӗнчи тасатмалли сооруженисен проекчӗсене хатӗрлес тӗлӗшпе вӑй хунӑ. Акӑ 1985 ҫул ҫитнӗ. Мускав. Ҫӗнйӗркелӳ. Наина – ҫӗршыври пӗрремӗш леди. Наина Иосифовна ачасене пулӑшас тӗлӗшпе ӗҫлеме пикенет. "Наина ача ҫуртне е больницӑна пуҫтарӑннине нихӑҫан та никама та каламан, – ҫырнӑ каярахпа Борис Ельцин "Президентский марафон" кӗнекере. – Ыркӑмӑллӑх мероприятийӗсене чунӗ ыйтнипе йӗркелетчӗ вӑл.

Унӑн сӑпайлӑхӗ, ҫынна юратни вӑл сайра-хутра телекурава паракан интервьюсенчен, тепӗр чухне манпа пӗрле халӑх хушшине тухса ыттисемпе хутшӑннинчен палӑратчӗ. Ҫынсем ҫакна туятчӗҫ. Ун патне туртӑнатчӗҫ".

Наина Ельцинӑна темиҫе хутчен те сумлӑ наградӑсемпе чысланӑ. Вӗсен хушшинче – "Олимпия" наци премийӗ. Ӑна Раҫҫейре хӗрарӑмсене кӑна параҫҫӗ – политикӑри, бизнесри, наукӑри, культурӑри ҫитӗнӳсемшӗн. Наина Ельцинӑна пирӗн ҫӗршывра кӑна мар, чикӗ леш енче те аван пӗлеҫҫӗ. 1999 ҫулта "ҫынна юратакан чӗрешӗн" "Оливер" премипе чысланӑ.

**Чулпан Хаматова – ирхи ҫӑлтӑр**

Чулпан Хаматова – театр тата кино актриси, "Пурнӑҫ парнеле" ыркӑмӑллӑх фончӗн йӗркелӳҫисенчен пӗри.



**Илья Авербух, фигурист:**

– Шӑпа парни пулчӗ, ахӑр, ку – эпӗ Чулпан Хаматовӑпа, пур енчен те питӗ пултаруллӑскерпе, паллашрӑм.

Вӑл "Ледниковый период" проектра та пултарулӑхӗпе палӑрчӗ, пурне те тыткӑнларӗ. Ман шухӑшпа, ҫак телепроект хыҫҫӑн нумай-нумай ҫын коньки сырса пӑр ҫине ярӑнма кайрӗ.

"Пурнӑҫ парнеле" фонд пулӑшакан ачасем те, паллах, ҫак вӑхӑтра сенкер экран умӗнчен каймарӗҫ. Ҫакна Чулпанова аван ӑнланчӗ-тӗр – вӑл хӑйшӗн кӑна ярӑнмасть, унӑн ҫӗнтерӗвӗ пуриншӗн те питех те пӗлтерӗшлӗ. Тепӗр хут калас килет, Чулпан – питӗ пултаруллӑ, интеллигентлӑ, интереслӗ ҫын.

*Биографи*

Чулпан Хаматова 1975 ҫулта Хусанта ҫуралнӑ. Ашшӗ-амӑшӗ – Наиль тата Марина Хаматовсем – инженерсем. Чулпан ГИТИСран вӗренсе тухнӑ. Унӑн виҫӗ ача: Арина, Ася, Ия.

Тутар хӗрачи, ячӗ "ирхи ҫӑлтӑр" тесе куҫаканскер, малтанах трамвай водителӗн профессине суйланӑ. Ку ӑна питӗ романтикӑллӑ туйӑннӑ. Актриса карьери ҫинчен шухӑшламан та хӗрача. Литература урокӗсенче пӗрле вӗренекенсем умӗнче те сӑвва пӑхмасӑр калама вӑтаннӑ вӑл. Чулпан конькипе ярӑнма юратнӑ, театрсене, музейсене, консерваторие ҫӳренӗ. Саккӑрмӗш класра ӑна ашшӗ-амӑшӗ Хусан университечӗ ҫумӗнчи математика шкулне янӑ. Ҫемье йӑлипе хӗр пурнӑҫ ҫулне "тӗптӗрӗс наукӑсемпе" ҫыхӑнтарма шухӑшланӑ. Ҫак ӗмӗт шкултан вӗренсе тухсан финанспа экономика институтне илсе ҫитернӗ.

Шӑпа пӗр кӗтмен ҫӗртен вӑрт! улӑштарнӑ ҫула. Темиҫе уйӑх вӗреннӗ хыҫҫӑн Чулпан аслӑ шкулта вӗренме пӑрахса вырӑнти театр училищине куҫнӑ. Хӗр пултарулӑхне, телее, унта тӳрех асӑрханӑ, Турӑ панине Мускавра кӑтартма сӗннӗ. Ҫапла Чулпан ГИТИСа Алексей Бородин курсне лекнӗ. Лешӗ пултаруллӑ абитуриентӑна иккӗмӗш туртах каланӑ: "Илетпӗр!"

Чулпан карьери киноран пуҫланнӑ. Хӗр виҫҫӗмӗш курсрах фильмсенче ӳкерӗннӗ. Малтанах Вадим Абдрашитов режиссер "Время танцора" фильмӗнче роль сӗннӗ ӑна. Тӗрӗсленме кайнӑ чух хӗре сӑрланма-тумланма общежитийӗх пулӑшнӑ. Чӑн та, фильмри сӑнар Чулпанран тем чухлех аслӑ пулнӑ. Ҫур ҫул шухӑшланӑ-сӑнанӑ хыҫҫӑн Хаматовӑна ҫапах та рольте ҫирӗплетнӗ.

Валерий Тодорковскин "Страна глухих" ӗҫӗнчи Рита сӑнарӗ вара хӗре чапа кӑларнӑ. Критиксем те, куракан та пӗр шухӑшлӑ пулса Чулпан пирӗн ҫӗршыври чи пултаруллӑ ҫамрӑк актрисӑсенчен пӗри иккене ҫирӗплетнӗ. Унтан Хаматова Эшпайӑн "Дети Арбата", "72 метра", Хотиненкон "Гибель империи", Худойназаровӑн "Лунный папа" ӗҫӗсенче вылянӑ.

Кӗҫех театр алӑкӗ те уҫӑлнӑ. Малтанах РАМТ сцени ҫине тухнӑ вӑл. Унтан – Уйӑх театрӗ, Антон Чехов театрӗ. 1998 ҫулта Чулпана "Современника" чӗннӗ. Галина Волчекпа куҫа куҫӑн тӗл пулса калаҫнӑ хыҫҫӑн Чулпан килӗшнӗ. Чи пӗрремӗш ролӗсенчен пӗри – "Три товарища" спектакльти Пат. Хаматова халӗ те унтах вылять. Хӑйӗн вырӑнӗ ҫапах та кинора мар, театрта тесе шухӑшлать.

Чулпан Хаматова общество ӗҫне хастар хутшӑннипе те паллӑ. 2005 ҫулта Дина Корзун актрисӑпа пӗрле "Современник" сцени ҫинче гематологи чирӗсемпе асапланакан ачасем валли ыркӑмӑллӑх концерчӗ йӗркеленӗ вӑл. Ҫулталӑкран усал шыҫӑпа аптракан шӑпӑрлансене пулӑшакан "Пурнӑҫ парнеле" фонда аталантарма пуҫланӑ.

2007 ҫулта актриса ачалӑхри хӑнӑхусене аса илнӗ – коньки сырса Роман Костомаровпа пӗрле "Ледниковый период" проекта хутшӑннӑ. Вӗсем пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑ.

2008-2010 ҫулсенче Чулпан Хаматова Общество палатин членӗ пулнӑ.

**/РИА Новости/.**

ПАЛЛӐ ҪЫНСЕН ПУРНӐҪӖНЧЕН

- Юлий Цезарь автографӗ 2 милл доллар, анчах ӑна ниепле те шыраса тупаймаҫҫӗ.
- Чарльз Диккенс яланах пуҫӗпе ҫурҫӗр еннелле выртса ҫывӑрнӑ – ҫакӑ писатель пултарулӑхне ӳстернине ӗненнӗ вӑл.
- Китайра Анӑҫри паллӑ виҫӗ ята пӗлеҫҫӗ – Иисус Христос, Ричард Никсон, Элвис Пресли.
- Юлий Цезарь лавр пуҫкӑшӑлне хывмасӑр ҫӳренӗ – ҫапла майпа кукшаланма пуҫланӑ вырӑна пытарасшӑн пулнӑ.
- Мэрилин Монро кӑкӑр ҫыххишӗн пӗри 14000 доллар тӳленӗ.
- Альберт Эйнштейна пӗррехинче Израиль президенчӗ пулма сӗннӗ. Лешӗ хирӗҫленӗ.
- Альберт Эйнштейн вилес умӗнхи юлашки сӑмахӗсене пӗрле илсе кайнӑ – медсестра нимӗҫле ӑнланман.
- Пӗрремӗш Екатерина ҫапла йышӑннӑ – вӑл ирттерекен уявсенче никамӑн та касхи тӑххӑрччен ӗҫсе лартма юрамасть.
- I Елизавета вӑхӑтӗнче сухаллӑ арҫынсем налук тӳленӗ.
- I Елизавета вырсарникунсенче пурне те – пуянсемсӗр пуҫне – ҫӗлӗк тӑхӑнма хушнӑ.
- Виктория королевӑна туйра ҫур тонна таякан сыр парнеленӗ.
- Исаак Ньютон тӗшмӗше питӗ ӗненнӗ.
- Мари Кэрри Нобель премине икӗ хут тивӗҫнӗ, Радий элемента тупнӑ. Анчах та ӑна Франци академине пурпӗр илмен – хӗрарӑм пулнӑшӑн.
- Джон Рокфеллер 500000000 доллар ахалех валеҫсе пӗтернӗ.
- Уинстон Черчилль кунне 15 сигара туртнӑ.
- Итали наци ялавне Наполеон Бонапарт проекчӗпе ҫӗленӗ.
- Соломон патшан Израильте 700 арӑм, ҫӗр-ҫӗр еркӗн пулнӑ.
- 1944 ҫулта Фидель Кастро Кубӑри шкулта вӗренекен чи лайӑх спортсмен пулнӑ.
- Моцарт шкула нихӑҫан та ҫӳремен.

## И-ХИ-ХИК

– Сирĕн паспорт йĕркеллех мар – сăнÿкерчĕк тивĕçтермест пире, – теççĕ таможньăра арçынна.

– Мĕншĕн тивĕçтермест? Пурте йĕркеллех-çке, – хуравлать арçын. – Авă эпĕ – сулахайран виççĕмĕшĕ...

* * *

– "Васкавлă пулăшу" чĕннĕ-и?

– Чĕннĕ-чĕннĕ! Хăвăртрах килĕр!

– Машина подъезд умне çитрĕ. Тухăр.

* * *

– Çамрăк çын, акă сирĕн справка. Ах, мур, асăрхаман та, апат вăхăчĕ çитнĕ. Апат!

– Тăхтăр-ха, тăхтăр, эсир справкăна ман енне тăснăччĕ ĕнтĕ...

– Каларăм вĕт-ха – халĕ апат вăхăчĕ!

– Анчах та эсир манăн справкăна аллăртах тытса ларатăр!

– Пăрăнăр-пăрăнăр, эпĕ чÿречене хупатăп!

* * *

Стоматолог патне арçын пынă. Врач хайхин çăварне тишкерет – унта вара йăлт ылтăн шăл. Аптрасах каять шурă халатли.

– Хăш шăлне кăлармалла? – ыйтать хайхи.

– Мĕншĕн кăларасшăн кăна вара эсĕ? – тет арçын. – Сигнализаци вырнаçтар.

* * *

Çутçанталăк хÿтĕлевçисене ытларах маршруткăра тĕл пулма май пур: вĕсем çăвăнмаççĕ – планета çинчи таса шыва перекетлеççĕ, дезодорантпа усă курмаççĕ – озон сийне упраççĕ.

* * *

– Тинĕс хĕррине каяс килет.

– Мĕншĕн?

– Вăл мансăр питĕ хумханнă пек туйăнать...

* * *

– Тухтăр, операци ăнăçлă иртрĕ-и?

– Çапла. Саламлатăп сире – халĕ эсир чăн-чăн хĕрарăм: чунпа та, юнпа та.

– Тăхтăр-ха, манăнне аппендикс кăна касса илмеллеччĕ вĕт-ха!

– Ну сире, хĕрарăмсене, нихăçан та юрамалли çук.

* * *

Упăшка мана электрошокер туянса пачĕ, хăйне валли газ пистолечĕ илчĕ. Çавăнтанпах иксĕмĕр пачах та харкашмастпăр...

* * *

– Ывăлăм, дачăна кил-ха.

– Кăмăл çук.

– Кăлăхах килместĕн – кунта хитре хĕр нумай.

– Аха... Пĕр юмаха икĕ хутчен ямаççĕ, атте, çĕрулмие хăвăрах кăларăр.

* * *

Ĕнер такам интим-лавккана çаратнă. Мĕн вăрланине кура – лавккана хĕрарăм кĕнĕ. Мĕн чухлĕ вăрланине кура – вăл пĕчченех пурăнать пулас. Çитменнине – тахçантанпах...

* * *

– Манăн савни мобильлĕ телефон пекех.

– Мĕн, çавăн пекех пĕчĕк те питĕ хăвăрт çĕнелсе пырать-и?

– Çук, укçа пĕтсен манпа калаçмасть.

* * *

Адам вăранса каять. Хыпаласа пăхать те – аяк пĕр пĕрчи те çук!

– Мĕн ялапи ку?

– Кам кăшкăрчĕ-ха ĕнер: "Хĕрсем кирлĕ, хĕрсем кирлĕ!" – тесе?

* * *

– Малашне студентсене вĕренсе пĕтернĕ хыççăн профессипе кăна ĕçлеме ирĕк парасшăн.

– Пĕлесчĕ: депутатсене хăш аслă шкулта хатĕрлеççĕ-ши?

* * *

Компьютер ĕçлемест-и? Ку икĕ сăлтавпа çыхăнма пултарнă:

1. Вирус.
2. Антивирус.

* * *

– Эсĕ çуралнă кунунта чи хитриччĕ.

– Тавах, тăрăшрăм!

– Хăнусене ятарласах çавăн пеккисене пухрăн-и?

* * *

Каçхине ĕçрен таврăннă упăшкана çĕрулмипе, чăх какайĕпе, салатпа, икерчĕпе, панулми компочĕпе хăналарăм. Çисе тăраннĕ хыççăн тутине шăлкаларĕ те:

– Эсĕ мана пăрахса урăххи патне тухса каяс пулсан та апат çиме сирĕн патах çÿрĕп! – терĕ...

* * *

Эрех кĕленчине шăши çакланнă. Апла та сиккелесе пăхать, капла та – ниепле те тухаймасть. Юнашарах кушак иртсе пынине курать хайхи, пулăшу ыйтать:

– Эсĕ мана çак инкекрен хăтар, вара эпĕ йăлтах санăн пулăп!

Кушака йывăр-им? Урипе тĕкет те кĕленче кайса ÿкет, шăши сиксе тухса урайĕнчи шăтăкран кĕрсе тарать. Кушак ун патне пырать:

– Тух, атя, эсĕ мана сăмах патăн вĕт! Халĕ эсĕ йăлтах – манăн.

– Эй, ÿсĕр хĕрарăмăн сăмаххине шанма пулать-и вара? – хуравлать шăши.

* * *

– Çĕр грама вунă хут илсен мĕн пулать?

– Пĕр литр.

– Вăт! Тĕнчипех – килограмм, Раççейре вара – литр.

* * *

Упăшка çăвăнма кайрĕ. Пĕчĕк ывăлăм чупса килчĕ те:

– Анне, эсĕ аттене хăçан та пулин çаппа çарамас курнă-и? – тет.

– Э-э-э... – ним калама аптрарăм эпĕ.

– Хăвăртрах кайса кур, эппин, чăн та, пăхма хăрушă...



## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 8-960-307-31-51.**

**3.АКЦИЯ! ПЕСОК, ГРАВМАССУ,** щебень, керамзит. По низким ценам. Доставка. **Т. 8-960-307-31-51.**

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.ГРАВМАССУ, ПЕСОК, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-17-70, 8-927-668-97-13, 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-30-21, 44-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**15. Кирпич** любой. Т. 89613393363.

**17. Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**29.Картофелекопалки, косилки, грабли,** пресс-подборщики, **погрузчики,** доильные аппараты. РАСПРОДАЖА! ДОСТАВКА! Т.: 89373758095, 89379559802.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**33.Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 89063804835, 89276674605.

**37.**Ворота, калитки, **заборы,** навесы. **Ковка,** кровля, обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, сайт:metalservis21.ru

**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 89063814420.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**65.Песок, гравмассу,** бой кирпича, **щебень** известк-й, чернозём. Т.: 89196567752, 89093005705.

**66.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Уч-м ВОВ и пенсионерам – **скидки.** Т. 89176769379.

**74.КЕРАМБЛОКИ** вибропрессованные, пропаренные. **Все размеры. Доставка.** Т. 89176776846.

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**170.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг.** Т. 89033220479.

**172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку.** Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 8-903-322-04-79.

**180.Комбикорм, зерно, отруби,** муку горох-ю. Д-ка. Т. 89373916016.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**205.Цемент,** песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**295.Песок,** ОПГС, **щебень,** известь, асфальтную крошку, **навоз,** землю, **торф.** Доставка. Т.: 89196741016, 89603003816.

**322.ПЕСОК, щебень, гравмассу, керамзит.** Д-ка. Т. 89033220479.

**361.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 8-960-307-31-51.**

**358.Торф, навоз, ОПГС, песок** /речной, карьерный/, щебень, керамзит, бой кирпича, чернозем, асф. крошку. Пенсионерам – скидки. Т. 89278680644.

**464.Гравмассу, песок, щебень, чернозём.** Д-ка. Т. 89603098191.

**465.Гравмассу, песок, щебень, чернозём.** Д-ка. Т. 89093054261.

**514.БЛОКИ керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40, **цемент** в ассортименте. Т.: 8-927-668-94-54, 8-927-667-26-04.

**546.Тротуарные ПЛИТЫ,** брусчатку, **бордюры, водостоки.** Доставка, укладка. Т. 89033582042.

**569.2-комнатную квартиру-распашонку** в Чебоксарах в Садовом. Цена договорная. Т. 8-917-662-64-21.

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

**562.Коров, бычков, лошадей.** Т. 8-961-345-05-28.

**563.Бычков, телок, коров** и лошадей. Т. 8-967-794-92-82.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-961-342-90-59.

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**90.Бурение скважин** на воду "под ключ". **Т. 8-987-576-65-62.**

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**171.Кровельные, фасадные работы.** Т. 8-903-322-04-79.

**246.Бурение скважин** на воду. **Чистка** старых **скважин.** Т. 8-906-381-60-37.

**278.Кровля, обшивка** сайдингом, **утепление.** Т. 89176500640.

**547.ЗАБОРЫ** /профнастил, сетка-рабица, ж/б, кованые/, **ворота, калитки.** Сварочные работы. Т.: 89033582042, 44-20-42.

### ĔÇ РАБОТА

**297.Требуются каменщики, монолитчики** в Москву. Оплата своевременная. Т. 8-962-321-70-11.

**499.Для работы в Москве** и Московской **области** требуются рабочие следующих специальностей: плотники, штукатуры, маляры, столяры, ламинатчики, плиточники, подсобные рабочие с зарплатой от 50 тысяч рублей. Контактный телефон 89637709962 Алексей.

### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Эпĕ чăваш /51-170-60/. Мускав облаçĕнче фермăра ĕçлесе пурăнатăп. Ман пата куçса килме килĕшекен чăваш хĕрарăмĕпе паллашасшăн. Пурăнма вырăн çителĕклĕ. Т. 89853946213, Юрий.



« ХЫПАР »

Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07

Электрон почти: hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 07.08.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.

56-00-23 – издательство директорĕ.

Тираж 7919. Заказ 3024.